Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
23
ЙУНКУН
67 (4880)-мĕш №

Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Парти пурнăçĕ çинчен анлăрах та лайăхрах çутатса пымала!

Пирĕн çĕршыври массăсен политикăла активлăхĕ пит пысăккăн ÿсни, партин çĕнĕ кадрĕсене ĕçе лартни, партийе çĕнĕ членсем илни тата çавăнпа çыхăнса тăракан пысăк задачă—идейăлă воспитани парасси тата массăлă организацилĕ-партилĕ ĕçсене туса пырасси, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварте пулнă Пленумĕ кăтартса панă йăнăшсене тÿрлетес тĕлĕшпе парти организацисем халĕхи вăхăтра пысăк ĕç туса пыни—çаксем пурте совет пичетĕнче парти пурнăçĕ çинчен туллин çутатса пыма хушаççĕ.

Парти Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕ партилĕ ĕçре, коммунистсене партирен кăларнă чухне йăнăшсем пулнăран, партирен кăларнисен апелляцийĕсем çине формаллă-бÿрократла пăхнă пирки, пысăк çитменлĕхсем пулнине уçса палăртрĕ,—çав çитменлĕхсем вĕсем пичет партин нумай организацийĕсем тунă пысăк йăнăшсем çине çаварăнса пăхманнинчен, пытарнă тăшман туса пыракан усал ĕçе асăрхаманнинчен пайтах килнĕ. Вырăнсенчи пит нумай хаçатсенче партирен тĕрĕс мар кăларнисен сигналĕсем çине ним хускалусăр пăхнă, унтан та ытларах, уйрăм хаçатсем час-часах хăйсен страницисене тÿрĕ çынсем çинчен елеклеме панă.

Парти Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕ парти организацийĕсем умне пит пысăк задачăсем лартрĕ. Партилĕ пичетĕн ĕçĕ, центртинчен пуçласа заводсенчи хаçатсем таранах, ПСК(б)П Тĕп Комитет Пленумĕн постановленине пурнăçа кĕртнине сăнаса пырасси пулат. Нумай хаçатсен чи малтан хăйсен йăнăшĕсене тÿрлетмеле, хăйсем елекленĕ çынсене, сăлтав çук çĕртенех вараланă çынсене тÿрре кăлармала пулнă. Пичетĕн—апелляцисене пăхса тухас ĕç мĕнле пынине, парти организацийĕсем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек туса йарасси мĕнле пулса пынине, партилĕ ĕçри руководителсем кашни коммунис çине уйрăммăн пăхассине мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине сăнаса тăмала пулнă. Хаçатсен елекçĕсене, карйериссене питлес пулат. Нумай хаçатсем хăйсен тÿрĕнех туса пымали çак обйазаннăçĕсене халĕ туса пымаççĕ-ха йе çийелтен туса пыраççĕ.

Çак иртнĕ кунсенче парти Тĕп Комитечĕ „Звезда“ (Белоруççи компарти Тĕп Комитечĕн органĕ), „Советская Белорусия“, „Уральский рабочий“ хаçатсем парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене системăсăр тата çийелтен çутатнине кăтартса пачĕ,—çавă вăл парти организацисем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине çителĕксĕр çутатса пынинчен ăраснах курăнса тăрат. Пленум постановленине пичетлесе кăларнă хыççăн, йанвар-феврал уйăхĕсенче асăннă хаçатсем центрти хаçатсен умстатйисене илсе пичетленипех тата ăнсăртран заметкăсем пичетленипех иртерсе йанă.

Парти Тĕп Комитечĕ ытти нумай хаçатсенче те парти пурнăçĕ çинчен йапăх çутатса пынине кăтартса панă. Çакăн пек çитменлĕхе пĕтерсе хурас пулат. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ—республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи хаçатсенче „парти пурнăç“ йатлă пай йаланах пулмала тăвас, тесе йышăннă. Нацкомпарти Тĕп Комитечĕсен, крайкомсемпе обкомсен—облăçри, районри тата вырăнсенчи партактив, парти пурнăçĕн ыйтăвĕсемпе статйасемпе заметкăсем çырса, хаçатсен ĕçне тăтăшах хутшăнмала тăвас пулат.

Тĕп Комитетăн постановленийĕ парти организацисен пур руководителĕсем çине те, пирĕн пур редакторсем çине те пит пысăк обйазаннăçсем хурат. Вĕсен хаçачĕсен страницисенче парти пурнăçĕ çинчен нимĕн те çырман редакторсен уйрăмах хытă шухăшламала. Мĕншĕн тесен, парти пурнăçĕ çинчен çутатасси çине сÿрĕк пăхакан редактора хаçатăн большевикла руководителĕ тесе шутлама та çук пулĕ.

Парти пурнăçĕ çинчен çутатас ĕçри тĕп çитменлĕх,—ку çитменлĕх пур хаçатсен те пекех пур,—вăл парти пурнăçĕ çинчен çийелтен, йаланах пĕр пек çырни пулат. Заметкăсен содержанийĕ те, вĕсене çырнă чĕлхе те йаланах пĕр пек. Критикă та йаланах пĕр пек тата çийелтен пулса пырат. Час-часах çапла пулат—хаçат пĕр-пĕр работникейе парти организацин пурнăçĕнчи çитменлĕхе мĕншĕн критикленине чухламасăрах критиклет. Çавăн пек хаçатсенче чăн-чăн большевикла самокритикăпа критикă çук, ун вырăнне вĕсенче çухрашка заметкăсем пулаççĕ. Урăх майлă та пулат, унчухне вара хаçат, ĕç мĕнлине тĕплĕн пĕлмесĕрех, организацийе мухтат, партилĕ ĕçри руководителе тивĕç çук çĕртенех ырсăмахсем калат.

Йаланах пĕрешкел тата çийелтен çырни—вăл час-часах хăшпĕр „хамăр“ корреспондентсем йе „йатарласа кайнă“ корреспондентсем, чукунçул çинчи вагон чÿречинчен пăхнипех парти пурнăçĕнчи чи пысăк ыйтусене çутатма хăтланакансем, парти пурнăçне пĕлменипчен, партилĕ темăсем çине тишкерÿсĕр пăхнăран, тарăннăн пăхманран килет. Парти организаци пурнăçне тĕплĕн те тарăннăн вĕренес вырăнне, тепĕр корреспондент, вырăнта пит кĕске вăхăт хушши пулнă хыççăнах, çийелтен тата кăшкăрула выводсем туллийех туса статйа çырса та хурат. Партилĕ ыйтусене çутатас ĕçри çавăн пек метод политикă йенпе пит пысăк сийен кÿни çинчен каласа тăмали те çук.

Парти пурнăçĕ çинчен çырас ĕçе актив сахал хутшăнни,—пур хаçатсене те пекех тивекен çитменлĕх пулса тăрат. Тĕслĕхе илсе, „Социалистический Донбасс“ хаçат çинчен, промышленнăçлă пысăк районăн хаçачĕ çинчен калăпăр. Шахтăсенче, предприйатисенче партилĕ-массăлă ĕçсене туса пырас ыйтусем çинчен, партин çĕнĕ кадрĕсен ĕçĕсем çинчен, пропагандăпа агитаци опычĕсем çинчен тăтăшах çырса пынине, çав пур ыйтусем çинчен те парти активĕн вăйĕпе çырса пынине çак хаçатра шырамасан тата ăçта шырамала? Çав хаçат тăрăх пăхса пырас пулсан, Донбасра партилĕ пурнăç ерни-ернипе чарăнса тăрат тесе шутламала килет, мĕншĕн тесен хаçат çав ыйтусем тăрăх ерни-ернипе çырмаст.

Партин пысăк организацийĕсен—Донбас, Ворошиловград, Артемовск, Краматорск организацийĕсен пурнăçĕ çинчен пуринчен ытла штатлă корреспондентсем çырса тăраççĕ. Ворошиловградран штатлă корреспондент Жерновой çырат, Артемовскран—Мелцер т. ыт. те. Донбасри кирек хăш организацире те партилĕ ĕç ыйтăвĕсемпе тĕплĕ статйасем çыракансем тупăнмала. Анчах „Социалистический Донбасс“ хаçат редакцийĕ парти активне хаçат ĕçне хутшăнтарма, унпа ĕçлеме пĕлмест пулмала, парти активне ĕçе хутшăнтарассине хакла хумаст пулмала,—пĕтĕм ĕç те çавăнтан килет.

Нумай хаçатсем партилĕ ĕçри халĕхи вăхăтра чи кирлĕ, чи çивĕч ыйтусене тапратмаççĕ те пекех, чи лайăх чухне те—парти пурнăçĕнче пулакан уйрăм паха ĕçсене регистрацилеççĕ кăна, вĕсене тĕпчесе тухмаççĕ, парти организацийĕсене ĕçе лайăхлатма пулăшмаççĕ. Хаçатсем, сăмахран парти ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсем çинчен вĕсене ĕçе лартнине регистрацилесе çеç çыраççĕ, парти ĕçĕнчи çĕнĕ руководителсен ĕçĕсем çинчен, вĕсене ĕçре мĕн кирли çинчен, вĕсен çулĕ çинче тĕл пулакан йăвăрлăхсем çинчен çырмаççĕ. Çĕнĕ работниксене ĕçре мĕнле пулăшу памали çинчен хаçатсем сахал çыраççĕ.

Партилĕ ĕçри опытпа пĕр-пĕрине паллаштарни çук, партилĕ ĕçри организацилĕ пысăк ыйтусене тапратни çук. Йе тата партилĕ пропагандă ыйтăвĕсене илер. Хаçатсем пропагандиссен ĕçĕсем çинчен тишкĕрсе çырас вырăнне, пропагандиссен кадрĕсене пулăшас вырăнне, чи лайăх чухне те, уйрăм кружоксен ĕçне регистрацилениппех чарăнаççĕ. Парти ĕçĕнчи кадрсене идеологи йенпе çирĕплентерсе, теорийе вĕрентсе пырас вырăнне, çавăн чухлĕ çынна вĕренÿве йăвăçтарнă текен арифметикăпа т. ыт. те хăтланаççĕ. Çав вăхăтрах кашни организацире пропагандă ĕçĕнчи пит паха та çивĕч ыйтусем пулаççĕ.

Хаçат вăл парти организацийĕсен аллинче—вăйлă хĕçпăшал, ĕçри пысăк помошник. Парти ĕçĕнчи руководител çавна ăнланмасан, парти пурнăçĕ çинчен хаçатра мĕнле çырнипе интересленмесен,—вара унăн тавракурăмĕ пит хĕсĕк пулат. Парти ĕçĕнчи кашни руководителĕн задачи—хаçата парти пурнăçĕ çинчен уççăн та туллин çырса тăма пулăшасси, хаçатпа организацире самокритикăна анлăн сарма, партилĕ пурнăçа пĕтĕм çĕршыв умĕнче, партин кашни организацийĕ умĕнче тăракан политикăла пысăк задачăсен çуллĕшне хăпартма уса курасси пулат.

„Правда“ умстатйи,
1938 çулти мартăн 21-мĕшĕ.

1938 çулта çĕрулми тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чылай облăçсенче—Челябинск, Свердловск, Сталинград, Ростов çавăн пекех УССР-чи Донецк, Днепропетровск, Николайевск, Одесса облаçесенче, Краснодарпа Инçет-Хĕвелтухăç крайĕсенче, Крым АСС Республикĕнче тата ытти хăшпĕр республиксемпе облаçсенче те вырăнта çĕрулми лартса çимĕç тата вăрлăх валли кирлĕ чухлĕ туса илме пур условисем те пур çинчех çĕрулмине çак вăхăта çитиччене ытти крайсенчен, облăçсенчен тата республикăсенчен кÿрсе тăнине нимĕнле те тÿсме çук, тесе шутлат.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çĕрулмине облăçран облăça турттарса килес ниме йурăхсăр практикăна пĕтерме, вырăнта лартса тата вырăнта хатĕрлесе çĕрулмине çителĕклĕ таран тума кирлĕ, тесе шутлат.

Çакăн пек тÿсме çук ĕç вăл çĕрĕç органĕсем ытла та çителĕксĕр ĕçленинчен тата вырăнсенчи партипе совет организацисем çĕрулми лартса тăвас ĕç çине çителĕксĕр пăхнинчен килнĕ. Кăна çĕрулмин вăтам тухăçлăхĕ халĕ те айалти вишере тăнипе (сойузăн хура мар çĕрлĕ облăçсенче 100—120 центнер, кăнтăр тата кăнтăр хĕвелтухăç облăçсенче 45—55 центнер), çирĕплетсе пама пулат.

Çаксене шута илсе, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. 1939 çулта туса илнĕ çĕрулмине пĕр облăçран тепĕр облăça чукунçул тăрăх турттарса çÿреме чарас.

2. ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, сойузлă, автономлă республиксен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, край тата облăç ĕçтăвкомĕсене 1938 çулта ССР Сойузĕнче 6.708,6 пин гектар çинче çĕрулми лартса илме тунă государствă планне тултарма хушас, çĕрулми лартма пăхнă плана вырăнти ресурсăсемпе тултарас тĕлĕшпе пур ĕçсене те тумала.

3. Пысăк тухăçлă çĕрулми туса илес тĕлĕшпе, малта пыракан колхозсен опычĕсем тăрăх, колхозсене çаксене тума сĕнес:

а) çĕрулми акмали çĕр пур уйхир бригадисенче пуринче те йаланлăх звеносем тумала, вĕсем сумне çĕрулми лартнă çĕр участкине пĕтĕм ĕç вăхăтне валли çирĕплетмеле:

б) кашни гектартан плантан иртерсе пĕр тоннă ытларах çĕрулми илнĕ звеносене 5—6 ĕçкунĕ хушса памала тăвас;

в) çĕрулмине ун умĕн ку вырăнта çĕрулмишĕн лайăх культурăсем акнă çĕрсем çине лартмала;

г) хуратапралă мар районсенче çĕрулми лартакан кашни гектар çине 30—40 тоннăран кайа мар, кăнтăр йенчи районсенче 15—20 тоннăран кайа мар тислĕк тата çĕре çемçетекан ытти имçамсене тăкмала, тата çавăн пекех вырăнти пур тĕрлĕ удобренисемпе те (кĕл, торф т. ыт. те) усă курмала;

д) лартма чи лайăх çĕрулмисене суйласа илмеле;

е) çĕрулмийе йаровизацилесе лартассине анлăн сармала;

ж) çĕрулми лартассине чи кĕске вăхăтра иртерсе, шăтса тухнă хыççăн сÿрелемеле, 3—4 хутран кайа мар çумкурăксенчен тасатса çĕре кăпкалатмала;

з) çĕрулми кăларнă хыççăн çĕре тепĕр хут сухаласа тата сÿрелесе тухмала.

4. Колхоз правленисене, çĕрулми пухса кĕме тытăннă хыççăнах, çĕрулми пухса кĕнĕ шутран 10—15 процент ертел членĕсене çĕрулмипе аванс пама ирĕк парас.

5. Машинсем тăвакан промышленнăç халăх комиссариатне (йалхуçалăх машинĕсем тăвакан промышленнăç Тĕп управленине) уйхир ĕçĕсем пуçăннă вăхăт тĕлне, 1938 çулти майăн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, улма лартакан 4000 машин туса кăларса вырăнсене çитермеле тума хушас.

6. Çанталăк уйар пулакан кăнтăрти облăçсенче çĕрулми пăсăлнипе кĕрешес тата акма сывă улма илес тĕлĕшпе 1938 çулта çулла çакăн чухлĕ вишепе çĕрулми лартмала тăвас:

УССР тăрăх:—40 пин гектар.

Çак шутран: Донецк облăçĕ тăрăх—9 пин гектар,

Днепропетровск облăçĕ тăрăх—10 пин гектар,

Николайевск облăçĕ тăрăх—8 пин гектар,

Одесса облăçĕ тăрăх—10 пин гектар,

АМССР тăрăх—3 пин гектар,

РСФСР тăрăх:—9300 гектар.

Çак шутран:

Оренбург облăçĕ тăрăх		400 гектар;
Саратов облăçĕ	тăрăх	900;
Нимĕçсен АССР	—„—	500;
Сталинград облăçĕ	—„—	1800;
Ростов облăçĕ	—„—	2000;
Краснодар крайĕ	—„—	1000;
Орджоникидзе крайĕ	—„—	1200;
Крым АССР	—„—	1500.

7. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулта суртлă çĕрулми лартма йышăннă плана тултарма тата пĕтĕм лаптăк çинче суртлă çĕрулми лартасси çине хăвăртрах куçма:

а) колхозсенчи мĕн пур суртлă çĕрулмисене суртлă марисемпе çуркунне улăштарса илсе, колхозсемпе колхозниксен суртлă çĕрулмисене сутăн илсе, çавăн пекех тата суртлă çĕрулмисене пĕрмерĕн суйласа илсе вырăнсенчи суртлă çĕрулмисемпе пĕтĕмпех лартас ĕçре уса курмала;

б) 1938 çулта урăх облăçсенчен кÿрсе килекен суртлă çĕрулми вăрлăхне совхозсене вăрлăх участки çине лартма çеç валеççе памала;

в) 1938 çулта сутăн илмели тата заготовкă шучĕпе илмели хак çумне çакăн пек суртсемшĕн хушса памала тăвас:

хăвăрт пулса ĕлкĕрекен столовăй валли кайакан суртсемшĕн:

„ранняя роза“, „епикур“, фитофторăна парăнман 8670-лĕ суртшăн, универсалнăй „лорх“ — пур районсенче те:

рак текен чире парăнман суртсемшĕн—чикĕ хĕрринчи районсенче—УССР, БССР, Карел АССР, Инçет-хĕвелтухăç крайĕнче, Ленинград тата Калининск облăçĕсенче:

техникăла суртсемшĕн:

„волтман“, „силезийа“ — крахмалпа патокă тăвакан промышленнăçлă вырăнсенче — Йарославл, Рйазан, Горький, Орел, Тамбов облăçĕсенче, Тутар тата Чăваш АСС Республикĕсенче;

„кореневский“—Иваново, Йарославл, Куйбышев тата Рйазан облăçĕсенче;

„серп и молот“—Тамбов облăçĕнче.

Надбавкă хисепне çакăн чухлĕ тăвас:

Заготовкă шучĕпе памали хак çумне пĕрремĕш категоришĕн 10 процент, иккĕмĕш категоришĕн 5 процент, сутăн илмели çумне пĕрремĕш категоришĕн 5 процент, иккĕмĕш категоришĕн 3 процент.

8. УССР, БССР тата Карел АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, Инçет-хĕвелтухăç крайĕн, Ленинград, Калинин облăçĕсен ĕçтăвкомĕсене чикĕ хĕрринчи районсенче çитес 2—3 çул хушшинче пĕтĕмпех рак текен чире парăнман суртсем лартасси çине куçса çитме хушас.

Чикĕ хĕрринчи районсенче рак текен чире парăнман суртлă çĕрулми лартакан колхозсемпе колхозниксене государствăна çĕрулми памалли районри нормăран çур нормă памала туса лгота парас.

9. ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, кăнтăрти тата хĕвелтухăç йенчи сойузлă тата автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, крайсенчи тата облăçсенчи ĕçтăвкомсене мартăн 30-мĕшĕнчен, ытти крайсемпе облăçсенче тата республикăсенче апрелĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, кашни районпа колхозăн уйрăмлăхĕсене шута илсе, çĕрулми тухăçне ÿстермели практикăла ĕçсене палăртса тухса, агрономсене хутшăнтарса кашни колхозра сÿтсе-йавма, çав мая палăртнă ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртмеле тума хушас.

10. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Совет Контролĕн Комиççине çак постановленийе мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине йалан тĕрĕслесе тăма хушас.

Çак задачăсене пурнăçа кĕртессине пысăк вырăна лартса, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вырăнсенчи совет организацийĕсене, çĕрĕç органĕсене, МТС тата совхоз директорĕсене çĕрулми лартас ĕçре, лартнă çĕрулмисене пăхса ÿстерес тата пуçтарса кĕртес ĕçре йалан оперативлă йертсе пыма хушат.

ССР Сойузĕн Халăх
Комиссарĕсен Совечĕн
председателĕ—**В. Молотов.**

ССР Сойузĕн Халăх
Комиссарĕсен Совечĕн
ĕçĕсене тăваканĕ—
Н. Петруничев.

Мускав, Кремл.
1938 ç. мартăн 19-мĕшĕ.

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнчи хайар çапăçусем

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра вунă кун ытла ĕнтĕ пысăк çапăçусем пыраççĕ. Республиканцăсем Теруел çине наступлени тунă пирки пăлхавçăсем тата Италипе Германи интервенчĕсем кунта пысăк вăйсем илсе килсе тултарнă. Вĕсем хĕвелтухăç фронтне 150 пине йахăн çарсем, пуринчен ытла Итали çарĕсем, самолотсем 700 ытла, пине йахăн тĕрлĕ калибрлă орудисем, çĕршер танксемпе броневиксем тата вăрçă хатĕрĕсен пысăк запасĕсем илсе пынă.

Мартăн 9-мĕшĕнче фашиссем Испанири вăрçă вăхăтĕнче халиччен пулман пысăк наступлени тума пуçланă. Белчите—Монталбан районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем республиканцăсен фронтне татса кĕнĕ. Интервентсен вăйлăран та вăйлă техникăпа хĕçпăшалланнă çарĕсем хĕснĕ пирки республикă çарĕсене кайала чакма тивнĕ. Пăлхавçăсем Белчите, Монталбан, Алканиз, Каспе йатлă хуласене тата халăхсем пурăнакан ытти вырăнсене чылай йышăннă.

Мартăн 20-мĕш тĕлне фронт линийĕ Ескатронран, Касперен, Алканизран тата Монталбанран хĕвелтухăçнеле тата кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле иртсе пынă. Йулашки чĕлтерÿсем тăрăх, пăлхавçăсен малта пыракан чаçĕсем тинĕс çыранĕнчен тÿррĕн 60 километрта тăраççĕ.

Фашиссен авиацийĕ фронтра тÿремĕн вăрçнипе пĕрлех интервентсем республикă тылĕнчи халăхсем пурăнакан вырăнсем çине те варварла пырса тапăнаççĕ. Мартăн 16-мĕшĕнчен пуçласа фашиссен авиацийĕ кашни кунах Барçелонă (Каталонин тĕп хули) çине пырса тапăнат. Мартăн 18-мĕшпе 19-мĕш хушшинче кăна Барçелонăра, фашиссен авиацийĕ бомбăсем пăрахнипе, вилнисемпе аманнисем 3.300 çын шутланаççĕ. Çуртсене çĕршерĕн ишĕлтерсе антарнă.

Çĕнĕрен наступлени тума пуçласа, интервентсем хăйсен умне тинĕс çыранĕсене çавăрса илсе, республикăлă Испани территорине икĕ пайа уйăрас задачă лартнă пулмала.

Республикă командованийĕ, пăлхавçăсемпе интервентсен наступленине тытса чарас шутпа, чылай ĕçсем туса иртерет. Республиканцăсем тăшмана хирĕç хăйулăн, паттăрăн тăраççĕ. Кайала чакасси хал йерипен пулса пырат. Тата ытларах пысăк испытанисенче пурăнса иртернĕ республикăлă Испани Италипе Германи çарĕсем хĕссе пынине çакăнта та çапса аркатасси пирки иккĕленмели çук. (ТАСС).

„... Англи Италине кĕтевле укçа пама шутлат...
... Итали самолочĕсем Англин суту-илÿ парохочĕсем çинче тупăсемпе пересçĕ..
(хаçатсенчен).

КĔТЕВЛЕ ПАНА УКÇА ТĂРĂХ ПУЛАКАН ПРОЦЕНТСЕМ
М. Отаров ÿкерчĕкĕ.

АЛВАРЕС ДЕЛ ВАЙО ЗАЙАВЛЕНИЙĔ

Англи пичетĕнче Испанин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Алварес дел Вайо Англи халăхне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Алварес дел Вайо çапла çырнă: Йулашки вăхăтра пăлхавçăсем Барçелонă çине бомбăсем пăрахнипе унта икĕ пин çын вилнĕ тата çавăн чухлех аманнă. Сывлăшра пулас вăрçăн хăрушлăхне малтанах каласа хуни,—тесе çырнă Алварес дел Вайо,—Барçелонăра ирсĕр чăнлăх пулса тăчĕ. Испани халăхĕ Англи халăхне Барçелонăри мирлĕ халăха пĕтерсе тăкассине хирĕç протеслеме, çавăн пекех Испани правителствине хĕрарăмсемпе ачасене пиншерĕн вĕлерекен фашисла çынвĕлеренсенчен сыхланмали хатĕрсем туйанас правасăр хăваракан политикăна хирĕç хăйĕн сассине çĕклеме чĕнет.

Алварес дел Вайон çак чĕнсе каланине пичетлесе кăларса, хаçатсем „хутшăнас мар“ политикăна пĕтерме кирли çинчен тата Испани правителствине йутçĕршывсенчен хĕçпăшалсем илме май пама кирли çинчен кăтартса çыраççĕ.

Кĕскен

** Германин вишĕ самолочĕ мартăн 19-мĕшĕнче Литва территорийĕ çинче вĕçнĕ. Англи хаçачĕсем Германипе Литва чиккине Германи çарĕсене нумай илсе пырса тултарни çинчен пĕлтереççĕ.

** Германи правителстви Лигă нацине çапла пĕлтернĕ: „Австрине Германи государствин составне кĕртнĕ май вăл Лика наци членĕ пулма чарăннă“, тенĕ.

** Германи правителстви Австрири перекет кассисен пурлăхне йалтах туртса илсе, ăна Германи государствин пурлăхĕ туса хуни çинчен пĕлтернĕ.

** Китайăн вишĕ пин горнякĕ Малакă çурма утравĕнче Йапонин çĕркăмрăк кăларакан шăхтисенче ĕçлеме пăрахнă.

„КУЗНЕЦКСТРОЙ“ ПАРОХОД КАПИТАНĔ ТĔЛĔШПЕ ЙАПОНИ СУЧĔ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

Йапони пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 20-мĕшĕнче Хакодате йатлă хулара советăн „Кузнецкстрой“ парохочĕн капитанне суд тунă. Пароход капитанне 1.500 иен штраф тÿлемеле приговор йышăннă. Прокурор капитана пĕр çул хушши хупса усрамала тума ыйтни çинчен паллă тăваççĕ.

(ТАСС).

Парти пурнӑҫӗ

Малта пыракан шанчӑклӑ ҫынсене—парти ретне

ПСК(б)Парти Тӗпкомӗ 1936 ҫулти ҫен-т̆абӗрӗн 29-мӗшӗнче йышӑннӑ решенире парти ретне илес тӗлӗшпе татӑклӑ кӑтартусем парса хӑварчӗ.

Парти ретне илнӗ чухне кашни ҫынна уйрӑмӑн пӑхса тухмала, кашни ҫынна тӗплӗн пӗлсе тӑмала. Парти ретне совет влаҫӗшӗн, парти ӗҫӗшӗн чунтан тӑрӑшса ӗҫлекен ҫынсене илмеле.

Парти ӳсӗмӗшӗн пуҫламӗш организацисен, парти членӗсен ответлӑ пулса, тӑрӑшса ӗҫлемеле. Анчах, ҫапла пулсан та, партин хӑшпӗр пуҫламӗш организацийӗсем парти ретне ӳстересси ҫине ҫителӗклӗ таран ҫаврӑнса пӑхмаҫҫӗ-ха.

Акӑ Шупашкар хулинчи хӑшпӗр организацисем 1936 ҫултанпа пӗр ҫынна та парти ретне илмен.

Ҫутӗҫ халӑх комиссариатӗнчи парторганизацинче пайанхи кун тӗлне 12 коммунис шутланса тӑрат̆, вӗсенчен—пӗр кандидат (Гаврилов йулташ). Сочувствуйушчисем пӗр ҫын та ҫук.

Гаврилов йулташ парти кандидатӗнче 1925 ҫултанпа тӑрат̆ пулин те, парторганизаци ӑна парти членне куҫарас тӗлӗшпе нимӗн те ӗҫлемен, ӗҫлеме те шухӑшламаст̆. Парторганизаци унӑн ӗҫне тӗрӗслесе, астуса пымаст̆, ӑна рекомендацисем тупма пулӑшмаст̆.

Кунта парти вӗрентӳне те лайӑх организацилемен. Парти членӗсем пурте ленинисӑмӑ вӗренмели кружокра тӑраҫҫӗ. Кружок руководителӗ Р. Осипов йулташ. Анчах вӑл ҫак вӑхӑта ҫитсе пӗр ваҫати те туса иртермен.

Акӑ тата Йалхуҫалӑх институтӗнчи парторганизаци ӗҫне илсе пӑхар. Кунта вӗренекен студентсем Кадышев, Йевдокимов, Казакова йулташсем ССР Сойузӗн Верховнӑй Совечӗн суйлавӗ вӑхӑтӗнче агитаторсем пулса, тӑрӑшса тата хастарлӑн ӗҫленине кӑтартрӗҫ. Вӗсем шанчӑклӑ тата малта пыракан ҫынсем. Халӗ те лайӑх ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Парти ретне кӗме хатӗрленсе ҫитнӗ. Анчах рекомендацисем тупса ҫитерейменнипе парти ретне кӗрейменсӗр тӑраҫҫӗ. Партин хӑшпӗр членӗсем рекомендаци пама пӗр сӑлтавсӑрах хӑраса тӑраҫҫӗ.

Институтри преподавател Филимонова йулташ (партинче 1923 ҫултанпа тӑрат̆) Йевдокимов йулташа партине кӗме рекомендаци паратӑп, тесе виҫӗ уйӑх хушши тӑсса пынӑ.

Куп пек тӗслӗхсем кунта татах та пур.

Йалхуҫалӑх институтӗнчи парторганизаци 1936 ҫултанпа мӗн пурӗ те пӗр ҫынна кӑна парти ретне илнӗ. Ку организаци партине кӗрес текенсене пулӑшмаст̆. Акӑ, Казакова йулташ парти кандидатне кӗмели анкетӑна тӗрӗс ҫырма пӗлменнипех, унӑн зайавленине пӑхса тухасси пӗр уйӑх ытла тӑсӑлса пынӑ.

Ҫакӑнта кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене халех пӗтермеле. Парторганизацисен кандидатсемпе сочувствуйушчисен хушшинче ӗҫе тивӗҫлипе организацилесе, кандидатсене—парти членне куҫма, сочувствуйушчисене кандидата кӗме пулӑшмала.

Атлашева.

—○★○—

Тӳрлетнӗ йӑнӑш

Йетӗрне районӗнчи парторганизаци халӑх тӑшманӗсене тӑпӑлтарса тӗп тӑвас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ. Анчах, ҫав калама ҫук паха ӗҫе тунӑ хушӑрах, йӑнӑшсем те пулнӑ. Епӗр ҫак пӗчӗк статйара ҫавӑн пек пӗр йӑнӑш мӗнле пулни ҫинчен, райком ӑна тӳрлетнӗ пулин те, каласа парасшӑн.

ПСК(б)П райкомӗн бӳровӗ 1937 ҫулхи окт̆абӗрӗн 10-мӗшӗнче йышӑннӑ решени тӑрӑх З. Семенов йулташа, вӑл „йалсовет председателӗ пулнӑ чухне ҫынна хӗненӗшӗн ӑна халӑх сучӗ айӑпланӑ" тесе, парти кандидатӗнчен кӑларнӑ.

Анчах, тӗрӗссипе илсен, мӗнле пулнӑ-ха З. Семенов йулташ „айӑпа кӗни"?

1933 ҫулхи йанвар уйӑхӗнче З. Семенов йулташа Асламас йалсовет председателне суйласа лартнӑ. Унӑн йалсоветпа колхоз ӗҫӗсене йусаса йарас тӗлӗшпе калама ҫук вӑйлӑ ӗҫлемеле килнӗ, мӗншӗн тесен, йалсовечӗн малтанхи председателӗ пулнӑ Осипов тата парти йачейкин ҫекретарӗ пулнӑ Платонов (иккӗшне те партирен тӗрӗс кӑларнӑ) ӗҫсене пӗтӗмпех йухӑнтарса йанӑ.

Осиповпа Платонов ӗҫленӗ вӑхӑтра йалти тӑшманла етемсен ушкӑнӗ иртӗнсе пурӑннӑ. Кулаксен йулашкийӗсем, спекул̆антсем, чиркӳ ҫыннисем, вырӑнти пуп йертсе пынипе, совет влаҫӗ туса иртерекен пур ӗҫсене те хирӗҫ тӑнӑ, колхоза аркатас тесе тӑрӑшнӑ. Тӑшманла ушкӑнра тӑнӑ пӗр ҫын, А. Чернов тенӗскер, коллективизацине хирӗҫ тӑрса тата тырпул тухӑҫне хӑпартма ҫук тесе уҫҫӑнах каланӑ, хӑйӗн плугне йурийех ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Ҫавӑн пек иртӗнсе, алхасса кайнӑ тӑшманла ушкӑна ӗнтӗ З. Семенов йулташ пуҫарнипе ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, тӑшманла ӗҫ тунӑ ҫынсене совет сучӗ умне тӑратса тивӗҫлипе айӑпланӑ.

Ҫапла З. Семенов йулташ, колхозниксемпе колхозницӑсене пӗтӗҫтерсе, колхоза ҫирӗплетнӗ, йалсоветне районра малти вырӑна кӑларнӑ. Йалсовет председателӗ пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра З. Семенов йулташ вунсакӑр хут преми илнӗ.

Анчах йалта тӑшманла ҫынсен йулашкийӗсем ҫаплах пулнӑ. Вӗсем (А. Чернов, Ф. Кузьмин, Д. Андрейев) выл̆ӑхӗсене колхоз тыррине ҫӗмӗрме кӑлара-кӑлара йанӑ, выл̆ӑхӗсене уйран тытса кӗненӗшӗн Капитонова йулташа хӗнеме тӑнӑ. Ҫав тӑшмансем, сӑтарҫӑсем З. Семенова йунанӑ, ӑна тапӑнма майлӑ вӑхӑт кӗтсе пурӑннӑ.

Пӗр каҫхине З. Семенов йулташ, уйхир ӗҫ бригадин бригадирӗпе пӗрле, колхозӑн уй-хирӗсене пӑхса ҫаврӑннӑ. Ҫав каҫхине те колхоза сӑтӑр тӑвакан тӑшманла етемсен выл̆ӑхӗсем колхоз тыррине ҫӗмӗрнӗ. Ҫавӑнта пулнӑ та вара З. Семенов йулташ „айӑпа кӗни". Сӑтӑрҫӑ А. Чернов, хӑйӗн выл̆ӑхне колхоз тырри ҫинче тытнине курсанах, З. Семенов йулташа ҫапнӑ тата пӑвма пуҫланӑ. Колхозниксем чупса пырсан тин З. Семенов йулташа тискер етемсен аллинчен хӑтарнӑ. Ҫавӑн пек тӗркӗшнӗ вӑхӑтра З. Семенов йулташ хӑйне пӑвакансенчен пӗрине хирӗҫ ҫапса йанӑ мӗн. Ҫавна ӗнтӗ каҫарма ҫук айӑп тесе шутласа, районри прокурор пулнӑ Лебедев (тӑшмансемпе ҫыхӑннӑшӑн партирен кӑларнӑскер) З. Семенова суда панӑ, судйа пулнӑ Белецкий (хал̆ хӑйне судпа айӑпланӑскер) хӑвӑрт суд туса, пӗр ҫулталӑк та 4 уйӑхлӑха хупса лартмала тунӑ,—ЧАССР Аслӑ Сучӗн кассаци коллегийӗтин приговора пӑрахӑҫа кӑларнӑ. Пӑрахӑҫа кӑлармасӑр,—З. Семенова мар, ӑна тапӑннӑ ҫынсене айӑплама кирли ӗҫрен курӑнсах тӑнӑ.

Калас пулат̆, райком бӳровӗ те З. Семенова парти ретӗнчен кӑларнӑ чухне ӗҫе тӗплӗн пӑхса тухман, халӑх сучӗн тӗрӗс мар приговорне ӗненнӗ,—ҫавӑнпа йӑнӑш решени йышӑннӑ пулнӑ. Райком бӳровӗ февралӗн 7-мӗшӗнче З. Семенов йулташ ӗҫне тепӗр хут пӑхса тухрӗ, хӑйӗн малтанхи тӗрӗс мар решенине улӑштарчӗ, З. Семенов йулташа парти ретӗнче хӑварчӗ. Вӑл хал̆хи вӑхӑтра райӗҫтӑвкомӑн ҫулйӗр пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлет, ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пырат̆.

Н. Д. Албутов.

Йетӗрне хули.

Ҫӗршыва ҫу, сӗт, чӑкӑт ытларах парар

Иртнӗ ҫулта колхозсем тӗштырӑсем нумай туса илчӗҫ, вӗсен халӗ выл̆ӑх апачӗсем те ҫителӗклӗ. Ҫаксем ӗнтӗ выл̆ӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерсе пыма, пӗтӗмӗшпе илсен пур колхозниксене те ӗне усракан тума май пачӗҫ. Хамӑр хуласене, рабочисен посолкисене сӗт продуктине ҫителӗклӗ парса тӑма, хамӑр республикӑри ҫу тата чӑкӑт тӑвакан заводсене кирлӗ чухлӗ сӗт парса тӑма условисем пур.

Лайӑх условисем пур пулин те республикӑра государствӑна сӗт тата ҫу тӑратасси чӑтма ҫук йулса пырат̆. Республикӑри ҫу завочӗсем ҫу тата чӑкӑт тумалли производствӑ планне тултараймаҫҫӗ. Хӑшпӗр йалсовечӗсем, колхоз правленийӗсем ҫак хатӗрлевсене тивӗҫлипе туса пыма тытӑнман, райӗҫтӑвкомсем ку ӗҫ хӑйне тӗллӗн пулса пырасса шаннӑ. Ҫакна пула ӗнтӗ Улатӑр, Ишлей, Канаш, Сӗнтӗрвӑрри, Тутаркас тата ытти районсенче те ку вӑхӑта ҫитсе государствӑна сӗтпе ҫу сутас ӗҫе тытӑнман. Мартӑн 10-мӗшне илсен (республикипе) государствӑна сӗтпе ҫу сутас плана 10,2 процент анчах тултарнӑ.

Государствӑ вал̆л̆и сӗтпе ҫу тӑратас ӗҫ ҫавӑн пек йулса пыни—вырӑнсенче массӑлӑ ӑнлантару ӗҫне ҫителӗклӗ туса пыманнинчен килнӗ. Хатӗрлев комитечӗн хӑшпӗр районсенчи уполномоченнӑйӗсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те обйазателствӑсене салатса ҫитермен. Ҫу промышленнӑҫӗн Чӑваш кантурӗн малтанхи руководстви пысӑк ҫитменлӗхсем тунӑ. Хӑшпӗр районсем тӑрӑх илсен, 1937 ҫулта сӗт тӑратакансене халӗ те укҫа тӳлесе татман.

Ҫак ҫывӑхри вунӑкунлӑхра март уйӑхӗн малтанхи вунӑкунлӑхӗнчинчен 5—6 хут ытларах сӗтпе ҫу хатӗрлемеле, тата сутӑн илмеле.

Сӗт тӑратас плана тултарни тата государствӑ вал̆л̆и сӗт сутӑн илни колхозсемшӗн, колхозниксемшӗн, халӑхшӑн усӑлӑ. Кӑна республикӑри колхозсенчен чылайӗшӗ государствӑ умӗнчи хӑйсен обйазателствисене ҫулран-ҫул срукчен тултарса пыни те ҫирӗплетсе парат̆. Сӑмахран, Йетӗрне районӗнчи Калинин йачӗпе тӑракан колхозри сӗт-ҫу тавар ферми иртнӗ ҫулта сӗт-ҫу тӑратас плана майӑн 8-мӗшне тултарнӑччӗ. Кун хыҫҫӑн, вӗсем государствӑна кашни ӗнерех 460-шер литр сӗт конвенцилӗ хакпа сутрӗҫ. Ку фермӑ (заведуйушчийӗ И. С. Дербенев) 1938 ҫулта та кӑтартулӑ ӗҫлесе пырат̆. 117 литр сӗт тӑратса государствӑ планне мартӑн 1-мӗшне пурнӑҫланӑ, конвенцилӗ хакпа государствӑна 100 центнер сӗт сутма пулса договор тунӑ. Фермӑ илнӗ обйазателствӑна майӑн 15-мӗшне пурнӑҫлама пулчӗ. Ку фермӑ Йетӗрнери ҫу заводне лайӑх пахалӑхлӑ сӗт леҫсе парса тӑрат̆.

Йетӗрне хулинчи А. П. Пискунова колхозницӑ пӗр ӗне усракансер, 1936 ҫулта 600 литр, 1937 ҫулта 1000 литр государствӑна сӗт сутрӗ. 1938 ҫулта 2000 литр сӗт сутма обйазателствӑ илчӗ. Вӑл ҫу заводне лайӑх пахалӑхлӑ сӗт леҫсе тӑрат̆.

Ҫак тӗслӗхсем ӗнтӗ колхозсемпе колхозниксем государствӑна сӗт тӑратмали хӑйсен обйазателствисене кӗске вӑхӑтра тултарма пултарасси ҫинчен кӑтартса параҫҫӗ.

Правителствӑ 1938 ҫулта сӗт тата ҫу сутӑн илесси лайӑх условисем туса пачӗ. Государствӑна сӗтпе ҫу сутасси обйазателлӑ йӗркепе тӑратассипе пӗр вӑхӑтрах пулса иртет.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Економсоветӑн 1938 ҫулхи февралӗн 15-мӗшӗнчи постановленийӗ тата Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫак ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗнче йышӑннӑ решени тӑрӑх, хатӗрлев организацийӗсен колхозсемпе государствӑна вал̆л̆и сӗт илме договор тунӑ чухне:

а) колхозсене хатӗрлев организацийӗсемпе договор туни тӑрӑх сутмали сӗтшӗн тата ҫунӑн 3—4 уйӑх маларах 50 процент аванс шучӗпе укҫа пама;

б) обйазателлӑ йӗркепе тӑратнийӑчен иртӗрсе государствӑна сутас йӗркепе кашни ӗнерен 150 литр ытларах сутнишӗн 10 процент тата 200 литр ытларах сутнишӗн 20 процент премии шучӗпе хушса пама ирӗк панӑ.

Колхозсене сутнӑ сӗт хакӗнчен шутласа 25 процент чухлӗ кирлӗ промышленнӑҫ таварӗсем пама ирӗк панӑ. Колхозсене сутма уйӑрнӑ таварсен шутӗнче автомобилсем, сӑран атӑ-пушмаксем, пӑтасем, тимӗрсем тата ытти таварсем те пур.

Кунсӑр пуҫне хӑйсен договорне пурнӑҫланӑ колхозсем, колхозниксем тата единоличниксем сӗт сутнӑ шутран 40 процент чухлӗ турантӑ тата хӑймине уйӑрнӑ сӗте пӗтӗмпех кайала илеҫҫӗ.

Енесене турантӑпа тӑрантарсан вӗсем кашни кун 3—5 литр ытларах сӗт хушса параҫҫӗ. Сӗтре ҫу ҫур процент хутшӑнат̆.

Сӗт тӑратас, государствӑна сӗт тата ҫу сутас ӗҫсене ӑнӑҫулӑн туса иртерессишӗн ҫу тата чӑкӑт завочӗсене, сепаратор пункчӗсене лайӑх йӗркене кӗртмеле. Сепараторсене ҫителӗклӗ хатӗрленӗ.

Республикӑри ҫу тата чӑкӑт промышленнӑҫӑн пахалӑхлӑ ҫу туса кӑларассишӗн кӗрешмеле. 80 процентран кайа мар чи лайӑх сурт—„Екстра" туса кӑлармала.

Сӗт-ҫу промышленнӑҫӗнче ӗҫлекенсен кадрне лайӑх вӗрентсе пыни, ӗҫре стахановла йухӑма сарса пыни кирлӗ. Пирӗн ӗҫре лайӑх тӗслӗхсем пур. Йелчӗкри ҫу заводӗнчи хӑйма уйӑракан Палимов, Йункӑ заводӗнчи (Тутаркас районӗ) лаборантка Гусева йулташсем иртнӗ ҫулта лайӑх ӗҫлесе пычӗҫ. Ку заводсенче кӑҫал та сӗт йышӑнма тӗплӗн хатӗрленнӗ.

Ҫу промышленнӑҫӗнче ӗҫленӗ халӑх тӑшманӗсем—шпион, провокатор Зеленски кӑтартнӑ тӑрӑх,—ҫупа чӑкӑт промышленнӑҫӗнче пӗр майах сӑтӑр туса пынӑ. Ылханлӑ тӑшмансем ҫу ҫине кантӑк ҫӗмрӗкӗсем, пӑтасем йарса халӑх сывлӑхне сийенлеме хӑтланнӑ.

Хатӗрлев организацисенче тата ҫупа чӑкӑт тӑвакан промышленнӑҫра ӗҫлекенсенчен тӑшмансем тунӑ сӑтӑрла ӗҫӗн йулашкисене хӑвӑртрах пӗтермеле. Пирӗн республикӑри ҫупа чӑкӑт промышленнӑҫӗ ҫак задачӑна лайӑх пурнӑҫлама пултарат̆. Епӗр халӑха лайӑх пахалӑхлӑ, тутлӑ сӗт, ҫу, чӑкӑт пама пултаратпӑр. 1938 ҫул ку тӗлӗшпе татӑклӑ ҫул пулса тӑма тивӗҫ.

И. Т. Комаров.

—○★○—

Комсомолецсем партине кӗреҫҫӗ

ШАМӐРШӐ. ПСҪЛКС райкомӗ малта пыракан примерлӑ комсомолецсене парти ретне кӗме пулӑшат̆. Вӗсемпе уйрӑм калаҫусем туса ирттерет, вӗсене ӗҫре ӳсме, политика тӗлӗшпе вӗренме пулӑшса пырат̆.

Акӑ, Павлов Алексей комсомолец. Вӑл нумай ҫул хушши общечествӑлӑ ӗҫре активлӑн та примерлӑн ӗҫлесе пынӑ. „Шурӑмпуҫ" колхоз председателӗ пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра йалти кулаксем унӑн ҫуртне вут тӗртсе ҫунтарса йанӑ. Анчах А. Павлов комсомолец колхоз ӗҫне пӑрахман, татах та вӑйлӑрах, хастарлӑнрах ӗҫлеме пуҫланӑ. Лайӑх ӗҫлесе пынине кура, ӑна райӗҫтӑвкомӑн ҫулйӗр строителствин лайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлеме илнӗ. Унта вӑл икӗ ҫул хушши ӗҫлесе хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартнӑ. Пуйанкасси йалсовечӗ кайра пынине кура, Павлов йулташа йалсовет председателне суйлаҫҫӗ. Хал̆хи вӑхӑтра вӑл унта ӗҫлет.

А. Павлов йулташ парти ретне кӗме комсомол райкомӗнчен рекомендаци ыйтнӑ. Райком рекомендаци панӑ. Ҫавӑн пекех лайӑх ӗҫлесе пыракан ытти комсомолецсем те парти ретне кӗреҫҫӗ.

Карпов Дмитрий (Вырӑс Чукалӗнчен), Скрипин Николай, хал̆ анчах Хӗрлӗ ҫартан таврӑннӑ комсомолец (районри финанс пайӗнче ӗҫлет), Бел̆цов Федор (Кивӗ Чукалран), Воронцова Анна (комсомол райкомӗн секретарӗ). Кусемсӗр пуҫне халӗ тата районри хаҫат секретарӗ пулса ӗҫлекен Н. Падиаров комсомолец парти ретне кӗме хатӗрленет.

Н. К.

—○★○—

Комсомолецсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ

ЙЕТӖРНЕ. „Хӗрлӗ Хучаш" колхоз ҫумӗнчи комсомол организацийӗ халӑх хушшинчи политикӑлла агитацилӗ ӗҫе лайӑх организацилене.

Колхозри кашни бригадӑрах агитаторсем пулса комсомолецсем ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ бригадӑсенче агитаторсем РСФСР, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗрентме пуҫларӗҫ. Ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен тата Верховнӑй Совет Положенине мӗнле вӗренсе пыни ҫинчен стена хаҫачӗсем ҫинче ҫутатса тӑраҫҫӗ.

Комсомол организацийӗ йалти ҫамрӑксенчен драмкружок организацилене. Драмкружок аван, йӗркелӗ ӗҫлесе пырат̆. Кӑҫал, Павловӑн „Йалта", Кӑлканӑн „Анисса" пйессисене лартса панӑ. Уйрӑмӑнах ку ӗҫре йалти ҫамрӑк учителсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем йалти ҫамрӑксене политикӑлла пӗлӳлӗхе ҫӗклессинче те пулӑшса пыраҫҫӗ.

Колхоз кӑҫал ҫӗнӗ клуб лартрӗ. Колхозниксем вӑхӑта усӑлӑ ирттереҫҫӗ, хаҫатсемпе журналсем, кӗнекесем вулаҫҫӗ. Осоавиахим йачейкинче Испанире, Китайра пулса иртекен вӑрҫӑсем ҫинчен докладсем итлеҫҫӗ тата вӑрҫӑ ӗҫне вӗренеҫҫӗ. Халӗ йалта хаҫат-журнал ҫырӑнса илмен колхозник ҫук ӗнтӗ. Хаҫатсемпе журналсене В. Андрейев почтал̆йон вӑхӑтра ҫитерсе парат̆.

М. Йемелйанов.

—○★○—

ПСҪЛКС Обкомӗ пӗлтерни

ПСҪЛКС Чӑваш Обкомӗн бӳровӗ, ПСҪЛКС Обкомӗн ҫекретарӗ пулнӑ А. С. Сымокин йулташ ҫинчен материалсене пӑхса тухса, комсомолӑн Шупашкар хули комитечӗн 2-мӗш пленумӗ Сымокин йулташа ПСҪЛКС ретӗнчен кӑларнӑ постановленине, ӑна (А. С. Сымокина) халӑх тӑшманӗсене пулӑшнӑ тесе айӑплани тӗрӗс мар пирки, пӑрахӑҫа кӑларнӑ. ПСҪЛКС Обкомӗн бӳровӗ А. С. Сымокин йулташа ПСҪЛКС членӗнче хӑвармала туса решени йышӑннӑ.

ПСҪЛКС Обкомӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Лебедев пропагандис Киров йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсене (Вологда облаҫӗ, Череновецк районӗ) „РСФСР Верховнӑй Совӗтне суйламали Положенине" вуласа парат̆.

Г. Йефимовский фото-ӳкерчӗкӗ

—★◆★—

Гравий турттараҫҫӗ

СӖНТӖРВӐРРИ. Районри чылай колхозсем ҫурхи шывсем тапраниччен ҫулсем ҫине гравий, хӑйӑр турттарса хатӗрлес ӗҫе вирлӗн тытӑнчӗҫ. Ҫак кунсенче Сӗнтӗрвӑрри — Ӗсмӗл ҫулӗ ҫине „Тӗрӗс ҫул" колхоз 380 кубла метр, „Кул̆турӑ" колхоз 100 кубла метр гравий турттартса хатӗрлерӗҫ. „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" тата Ворошилов йачӗпе тӑракан колхозсем те гравий турттараҫҫӗ.

В. Сидйаков.

М. Костин

Икӗ республикӑ ӑмӑртӑвӗ пуҫланчӗ

Мордва республикин столицинче—Саранск хулинче мартӑн 16—18-мӗшӗнче йалхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри сл̆очӗ пулса иртрӗ. Сл̆от 1937 ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗнчи итогсемпе 1938 ҫулхи задачӑсем ҫинчен сӳтсе-йаврӗ, 1938 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме Чӑваш республикипе социалисӑмла ӑмӑртса ӗҫлеме пӗр саслӑн килӗшсе, обйазателствӑ йышӑнса ҫирӗплетрӗ. Ӑмӑрту обйазателстви тӑрӑх Мордва республики 1938 ҫулта гектартан вӑтам шутпа 100 пӑт тӗштырӑ, 5 центнер кантӑр сӳсӗ, 150 центнер ҫӗрулми, 20 центнер махоркӑ туса илме пулчӗ. Кусемсӗр пуҫне тата кашни СТЗ, ХТЗ тракторпа 800 гектар, ЧТЗ тракторпа 2100 гектар ӗҫлеме пулчӗ. Выл̆ӑх-чӗрлӗх йенӗпе: кашни кӗсрене чуптарса хӑвармa, сӑвакан ӗнерен ҫулталӑкра 2000 литр сӗт илме пулчӗ.

Ҫавӑн пек задачӑ лартрӗҫ Мордва республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, трактористсемпе трактористкӑсем, выл̆ӑх чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри маҫтӑрсем. Ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртме, паллах, ҫӑмӑл мар. Анчах ҫавах та, ҫултан ҫула йышлӑланса пыракан йалхуҫалӑх стахановецӗсен опычӗсем ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртессине шантараҫҫӗ. Мордва республикин социалисӑмла йалхуҫалӑхӗ ҫултан ҫул ытларах та ытларах машинӑланса пынине, агротехникӑла ӗҫсем анлӑн пурнӑҫа кӗрсе пынине тата стахановла ӗҫлес йухӑм сарӑлса пынине шута илсен, Мордва колхозникӗсем хӑйсем панӑ сӑмаха пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе иккӗленмели ҫук. Мӗншӗн тесен Мордва халӑхӗ те хал̆ Совет Сойузӗнчи ытти вак халӑхсем пекех ирӗклӗ те хавaслӑ, телейлӗ те тулли пурнӑҫпа пурӑнат̆.

* * *

Ӗлӗк мордвасем хушшинче помещиксемпе кулаксем, мӑнастырсемпе казна 1,5 мӗлйун гектара йахӑн ҫӗр тытса тӑнӑ. Окт̆абӗрти аслӑ revол̆уци хыҫҫӑн ҫав ҫӗр пӗтӗмпех Мордва хресченӗсен аллине куҫнӑ. Хал̆ республикӑра акмали пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнчен 98,6 процент колхозсен аллинче тӑрат̆.

1937 ҫулта республикӑ вӑтам шутпа гектартан 12-шер центнер тӗштырӑ илнӗ. Ҫавӑн пек тухӑҫ вӑл ӗлӗкхинчен виҫӗ хут ытларах шугланат̆. Уйрӑм районсенче тырпул тухӑҫӗ татах та пысӑкрах. Акӑ, Ардатовски МТС ӗҫлекен колхозсенче гектартан 20—25-шер центнер ыраш илнӗ. Ромодан районӗнчи „Новый быт" колхозра гектартан тулӑ 16-шар центнер, сӗлӗ тата вир 19,6-шар центнер туса илнӗ. Ҫав районрах „Майӑн 1-мӗшӗ" колхозра ыраш 18-шар центнер, кӗрхи тулӑ 26-шар центнер, сӗлӗ 14-шар центнер пухса кӗртнӗ. „Иккӗмӗш пйатилеткӑ" колхозра 25-шар центнер ыраш туса илнӗ.

Тырпул тухӑҫӗ ӳссе пыни ӗҫкунӗсен хакне те ҫултан ҫула ӳстерсе пырат̆. 1935 ҫулта республикипе вӑтам шутпа ӗҫкунӗ пуҫне 2,2-шер килограм (1936 ҫулта шӑрӑх тӑнипе тырӑ сахал пулнӑ) валеҫнӗ пулсан, 1937 ҫулта 5,6-шер килограм валеҫнӗ. Уйрӑм районсемпе колхозсенче ӗҫкунӗ хакӗ татах та пысӑкрах. Инсаровски районри „Хӗрлӗ партизан" колхозра (председателӗ Сергейев йулташ, ССРС Верховнӑй Совет депутачӗ) 16-шар килограм, Молотов йачӗпе тӑракан колхозра 10-шар, килограм, Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхозра 9,9-шар килограм валеҫнӗ. 1937 ҫулшӑн 900-шер, 1000-шер пӑт тӗштырӑ ӗҫлесе илнӗ колхозниксем вуншарӑн шутланаҫҫӗ.

Ӗлӗкхи сухапуҫӗпе йӑвӑҫ сӳресем пачах пӗтнӗ. Мордва республикин уй-хирӗнче 1937 ҫулта 2048 трактор, 250 комбайн тата ытти тӗрлӗ шултра машинӑсем нумай ӗҫленӗ. Республикӑра хал̆ 46 машинӑ-тракторла станци, ҫуркуннерен пуҫласа татах 5 МТС ӗҫе тытӑнат̆. 1938 ҫулта Мордва республикин уй-хирӗнче 2.00 трактор, 311 комбайн ӗҫлемеле пулат̆.

Республикӑра тракторсемпе тата комбайнсемпе усӑ курас ӗҫе илсен, Чӑваш республикинчи МТСтанцисене кирлӗ опытсем чылай пур. Вӑтам шутпа 15 лаша вӑйлӑ кашни трактор пуҫне 1937 ҫулта 717-шер гектар ӗҫленӗ. Ромодановски МТСтанцинчи Орлов йулташ бригадинче кашни тракторпа 1139-шар гектар ӗҫленӗ. Тракторис Лапин йулташ хӑйӗн сменинчех 811 гектар, Кастерин—920 гектар ӗҫленӗ. Кочкуровски МТСтанцинчи комбайнер Платонов 767 гектар вырса пуҫтарса кӗртнӗ. Березн̆акри МТСтанцинче авӑн ҫапмали машинӑпа ӗҫлекен Йумашев машинис 40 кун хушшинче 1200 тоннӑ тырӑ ҫапса хӑйӗн ӗҫ нормине 300 процент тултарнӑ.

Революциччен Мордва ҫӗршывӗнче техникӑла культурӑсене 25 пин гектар таран ҫеҫ акнӑ. Хал̆ вӑл лаптӑк икӗ хут ытларах ӳснӗ. Кантӑр акса тӑвас тӗлӗшпе Мордва республики Совет Сойузӗнче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Чылай колхозсенче 250—300-шер гектӑр кантӑр акаҫҫӗ. 1937 ҫулта 30,5 пин гектар акнӑ пулсан, 1938 ҫулхи план тӑрӑх 42,2 пин гектар акма палӑртнӑ. Ҫав шутран 12 890 гектар вӑтам тӑрӑхри сурт, 8300 гектар кӑнтӑрти сурт акма палӑртнӑ. Кӑнтӑрти сӳс тухӑҫӗ уйрӑмӑнах пысӑк, Кочкурово районӗнчи „Мировой пролетариат" колхозра Байгушкин звенинче 1937 ҫулта 4,5 гектар лаптӑк ҫинчен вӑтам шутпа 24,6-шер центнер сӳс илнӗ. Гектартан 10—20-шер центнер сӳс илекен бригадӑсемпе звеносем вуншарӑн, ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ.

Анчах та Мордва республикӗнче кӑнтӑрти кантӑр сурчӗн вӑрри пулса ҫитме ӗлкереймест, ҫав суртӑн вӑрлӑхне ҫуллен айакран кӳрсе килме лекет. Ҫавӑнпа та ҫав сурта ҫелекцилесе вӑрӑ пулса ҫитекен сурт кӑларас тӗлӗшпе республикӑра анлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫак суртсемсӗр пуҫне тата Трубчевский текен сурт акаҫҫӗ. 1938 ҫулхи план тӑрӑх 2 500 гектар акма палӑртнӑ.

Техникӑла ытти тӗрлӗ культурӑсенчен 1938 ҫулта кунта 10.000 гектар йӗтен, 800 гектар какатник акма палӑртнӑ.

Техникӑла культурӑсене, пуринчен ытла кантӑр сӳсӗ тӑвас тӗлӗшпе республикӑра пурӗ 12 завод ӗҫлет. Кантӑрсене уйран пуҫтарса кӗртес ӗҫре кӑҫал МТС-сенче 20 машинӑ ӗҫлемеле пулат̆.

Техникӑла культурӑсене акса тӑвас тӗлӗшпе Чӑваш республикинчи колхозниксен Мордва колхозникӗсенчен вӗренмели нумай. Мордва халӑхӗ техникӑла культурӑсене, пуринчен ытла кантӑра йуратат̆, мӗншӗн тесен кантӑр вӗсене пысӑк усӑ парат̆. Акӑ, малта асӑннӑ Байкушкин звенинче 4,5 гектар ҫинчен илнӗ кантӑр сӳсне государствӑна 38.850 тенкӗлӗх сутнӑ. „Мировой пролетариат" колхоз государствӑна пӗтӗмпе 58.830 тенкӗлӗх кантӑр сутнӑ, сутмали тата 9000 тенкӗлӗх пур. Кантӑр сутса илнӗ укҫа кашни ӗҫкунӗ пуҫне 80-шар пус валеҫмелӗх пулнӑ. Государствӑна кантӑр сутса илнӗ укҫаран хӑшпӗр колхозник ҫемйипе 1937 ҫулта ӗҫкунӗсемшӗн 5—9 пин тенкӗ укҫан илнисем те пур.

Инсар районӗнчи „Путь к социализму" колхозра 252 гектар кантӑр акнӑ. 1937 ҫулта колхозӑн укҫа хален 1.200.000 тенкӗ тупӑш пулнӑ. Ҫав шутран чылай пайӗ кантӑртан пулнӑ.

Революциччен мордва йалӗсенче ҫурхи тулӑна мӗн пурӗте 6.400 гектар ҫеҫ акнӑ. 1937 ҫулта 137.100 гектар ҫинчен пуҫтарса кӗртнӗ.

* * *

Социалисӑмла йалхуҫалӑхӗ ҫеҫ мар, Мордва республикин промышленнӑҫӗ те хӑвӑрт ӳссе пырат. Промышленнӑҫ паракан пӗтӗм продукцине илсе 1913—14 ҫулхипе танлаштарсан 1937 ҫулта 14 хут ӳснӗ.

Квалификацилӗ рабочисен хисепӗ ӗлӗкхинчен 8 хут ытла ӳснӗ (18696 ҫын). Кунсӑр пуҫне тата транспортра 7570 ҫын ӗҫлет.

Мордва республикинче 20 ҫул хушшинче ӳснӗ промышленнӑҫран хал̆ ҫакӑн пек предприйатисем паллӑ вырӑнта тӑраҫҫӗ. Саранскри конҫервӑ завочӗ Совет Сойузӗнчи пысӑк заводсенчен пӗри шутланат̆. Ҫулталӑкра вӑл 15 мӗлйун банкӑ конҫервӑ парса тӑрат̆.

Катонинӑ фабрикӗ сукно промышленнӑҫӗ вал̆л̆и катонин парса тӑрат̆. Ҫав фабрикӑн хал̆ кӑларакан продукцин хакӗ Мордовире революциччен пулнӑ пӗтӗм промышленнӑҫ продукцийӗнчен 1,5 хут ытларах.

Сталинла пйатилеткӑ ҫулӗсем хушшинче республикӑ центрӗнче 9 пин киловат енерги паракан електростанци лартнӑ.

Зубово-Пол̆анск районӗнче тир промышленнӑҫӗ вал̆л̆и екстракт тӑвакан „Дубитель" завод лартнӑ.

Кусемсӗр пуҫне сӳс завочӗсем, хӑма ҫуракан заводсем, сӗт-ҫу завочӗсем тата крахмал завочӗсем ҫӗнӗрен нумай тунӑ.

1938 ҫулта Саранск хулинче сӳс-джут комбиначӗ ӗҫлеме тытӑнат̆. Ку комбинатра рабочисен хисепӗ Мордовире революциччен пулнӑ пӗтӗм промышленнӑҫра ӗҫленӗ рабочисен хисепӗ чухлӗ (2300 ҫын) пулат̆.

Паллах, хал̆хи предприйатисенчи шултра машинӑсене, ӗҫ условийӗсене ӗлӗкхи кустарла предприйатисенчисемпе танлаштарма нимӗнле май та ҫук.

* * *

Йалхуҫалӑхӗнче те, промышленнӑҫра та стахановецсен йышӗ ӳсех пырат̆. Колхозла йалсенче ҫӗнӗ ҫынсем,—мухтава тивӗҫлӗ комбайнерсемпе трактористсем, бригадирсемпе звенйевойсем ӳсеҫҫӗ. Республикӑри орденоносцӑсене пӗтӗм Мордва халӑхӗ пӗлсе тӑрат̆.

Мордва хӗрӗ 19 ҫулхи Маруҫа

20 колхоз ăмăртува хутшăнман

Куславкка (хамăр корр., телефон тăрăх). Иртнĕ çулта колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Апла пулсан та хăшпĕр колхоз руководителĕсем иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларнă. Нумай колхозсенче çуракине хатĕрленессипе ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлеççĕ. 65 колхозран 45 колхоз кăна социалисăмла ăмăртува хутшăннă. Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тата республикăра малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сĳочĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешӳве тухма чĕнсе каланине колхозсенче сӳтсе явассипе райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем организацилемен.

Вăйлă тырпул туса илесси вăл çуракине лайăх хатĕрленнинчен килет. Анчах Куславкка районĕнчи руководителсем çакна пайанхи куна çитсе те ăнланса илеймен-ха. Район çуракине хатĕрленессипе кайа йулса пынипе мартăн 19-мĕшĕнче пулнă йалсовет тата колхоз председателĕсен, уйхир бригадирĕсен районри канашлăвĕ те лайăх çирĕплетсе парат.

Райçĕрĕç пайĕн сведенийĕсем тăрăх пăхсан, районра акмалли вăрлăхсене суртласа пĕтерни пек курăнат. Анчах, кунта ĕç пачах урăхла. 25 колхоза тĕрĕслесе тухнă хыççăн, вăрлăхсем 35 процент çеç акма йурăхлипе палăртнă. Районра пĕр колхозра та акмали вăрлăхсене суртласа çитермен.

Мижер колхозĕнче акмали вăрлăха пĕр пĕрчĕ те çуртламан, амбарсене йур кĕнипе вăрлăхсем пăсалма пуçланă. Воробйовка колхозĕнче вăрлăх хывнă амбара çĕрçисем тапăннă та, „ку кайăксене епĕр чарма пултараймастпăр", тесçĕ правлени членĕсем.

Район вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес плана пайанхи куна çитсе 35 процент çеç пурнăçланă. Уйрăмăнах Йупсар, Воробйовка, Аслă Сала колхозĕсем кайа йулса пыраççĕ. Çавнашкалах Елменкасси, Вăрасăр, Туçи, Кармăш тата ытти колхозсем—пĕр лав та торф кăларман. Минераллă çăнăхсем кӳрсе килессипе Тĕрлемес, Чашлама, Туганаш колхозĕсем нимĕн те туман. Районĕпе 25 процент çеç тултарнă.

Районра йалхуçалăх машинисене тата кӳлмели таврашсене йусас ĕçе те тивĕçлипе тытăнман-ха. Çатракасси, Воробйовка колхозĕсенче лаша кӳлмели таврашсем çитмеççĕ пулин те, йусас тесе шутламаççĕ. Водопйанов йачĕпе тăракан колхозра ĕç лашисем çине чунсăр пăхнипе вĕсене начарлатса йанă. Аслă Салара 3 лаша стройран тухнă, 3 кĕсре хăм парахнă.

Кунта агротехникăна вĕрентессине те çителĕклĕ таран организацилемен. Районри колхоз шкулĕнчен 21 çына агрокурс урлă, 12 çынна машиноведсен курсĕнчен вĕрентсе кăларнă та, урăх ĕç туман.

Çуракине хатĕрленессипе йединоличниксем уйрăмăнах йулса пыраççĕ. Вĕсем акмали вăрлăха суртламан. Уйа пĕр лав та тислĕк кăларман, йалхуçалăх машинисене йусаман.

Районри суту-илӳ организацийĕсем те çуракине хатĕрленессипе вырăнтан тапранман. Машинăсемпе урапасене сĕрмелисем илсе килмен. Нумай йалпосенче спичкă, сахăр, махоркă çук.

Куславкка районĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешессипе Сĕнтĕрвăрри районĕпе социалисăмла ăмăртува тухнă. Ку районсем договор туса çирĕплетнĕ те, ăна пурнăçа кĕртессинчен кĕрешмен.

П. Перлов.

Договорсене тĕрĕслессине организацилемен

Елĕк районĕ йалхуçалăхĕнче пысăк çĕнтерӳ тăвассишĕн Трак районĕпе ăмăртса ĕçлет. Районри чылай колхозсем, бригадăсем звеносем пĕр-пĕрипе ăмăртаççĕ. Ăмăрту ĕçĕнче Александровскинчи „Хĕрлĕ Сормово" колхоз лайăх тĕслĕхсем кăтартса пырат. Ку колхоз иртнĕ çулта рекордлă тырпул туса илчĕ. Ыраш вăтам шутпа гектартан 18,67 центнер туса илнĕ. Йалхуçалăхĕнчи стахановецăсем 2—3 çул çимелĕх тĕштырă илчĕç. „Хĕрлĕ Сормово" колхозăн иртнĕ çулхи тупăшĕ пысăк. Укçа çине куçарса шутласан, 16.374 тенкĕ тупăш илнĕ. Колхозниксем 15 пин тенкĕ тăракан лаша вити тата зерносушилкă туса лартрĕç. Ĕçкунĕсем тăрăх та укçа нумай валеçнĕ.

Мартăн 25-мĕшĕнче йалхуçалăхĕнчи стахановецăсен районри сĳочĕ уçăлат. „Хĕрлĕ Сормово" колхоз çак тĕле çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитет. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хутшăнма зайавкă пачĕç.

Ассакассинчи „КИМ" колхоз Вутланти Молотов йачĕпе тăракан колхозпа ăмăрту договорĕ тунă. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе икĕ колхозĕ те лайăх ĕçлеççĕ. „КИМ" колхоз çуракине паха суртлă вăрлăхпа акма хатĕрленнĕ. Хĕллехи агрономилĕ ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пырат. Кунта удобренисем хатĕрлес йенĕпе пысăк ĕç тунă. Çуракине хатĕрленес ĕçре стахановла йухăм сарăлса пырат. Пĕрремĕш бригадăри Зинаидă Скворцова çуракине хатĕрленнĕ хушăра 78 ĕçкунĕ тунă. Йалхуçалăх машинисене, кӳлмели таврашсене такçанах йусаса, хатĕрлесе çитернĕ. Коњухсем хаљхи вăхăтра, вăрман хатĕрлесе турттарас ĕçсене пурнăçланă хыççăн, лашасене уйрăмăнах лайăх пăхма тытăнчĕç.

Ку колхоз та çуракине хатĕрленес йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Анчах та „КИМ" колхоз членĕсем хăйсемпе ăмăртакан Молотов йачĕпе тăракан колхозра çуракине мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен пĕлмеççĕ. Ăмăртăва тухнăранпа та договор мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе иртемен.

Йунтапари „Алмаз" колхоз „Хастар" колхозпа ăмăртăва тухнă. „Алмаз" колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе пырат. Ку колхоз членĕсем те „Хастар" колхозра вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешни çинчен пĕлмеççĕ.

Çапла ĕнтĕ райçĕрĕç пайĕ социалисăмла ăмăрту договорĕсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçе организацилемен.

Вас. Йефремов.

Лотерей билетне сараççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне сарас ĕç пуçланчĕ. Мартăн 21-мĕшне „Куљтурă" колхозра 120 тенкĕлĕх, парти райкомĕпе комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем хушшинче 400 тенкĕлĕх çыранчĕç. Вĕсем хушшинче Романов, Иванов, Квасков т. ыт. йулташсем те 40 -шер тенкĕлĕх çыранчĕç.

Сатур.

Пушкина „Знак почета" орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă. Икĕ çул хушшинче фермăра вăл 94 пăру пăхса ӳстернĕ.

П. И. Казанцев трактористпа молотилкăпа ĕçлекен В. И. Курмышкина машинисткă та Совет Сойузĕн орденĕсене илме тивĕçлĕ пулнă. Çавăн пекех Ковылкинори чăх-чĕп совхозĕн директорĕ Н. И. Василйев йулташа та орден парса наградăланă.

Мордва çыннисем хушшинче чапа тивĕçлĕ ĕççыннисем татах та нумай. А. Е. Платоновпа А. И. Антонов комбайнерсене пĕтĕм республикă пĕлсе тăрат. Çавăн пекех авăн çапвă çĕрте ĕçленĕ Бертайевпа Кнљаçкин машиниссем 1937 çулта 1000—1500-шер тоннă тырă çапса пысăк ĕç тухăçлăх тĕслĕхне кăтартнă.

Çавсемпе пĕрлех сӳс-кантăр маçтăрĕсене—Печказовапа Перфилкинăна, трактористкăсемпе машиниссенчен Иокина, Лебедева, Николайева, Косолапова, Ширшовăна тата ыттисене пĕтĕм республикă пĕлсе тăрат. Трактористкă Валгайева йулташа Мордва халăхĕ ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутатне суйланă.

Республикăра малта пыракан машинă-тракторла станцисемпе колхозсем, Ромодановори МТСтанци, „Новый быт", „Кр. пограничник", „Кр. партизан". „Майăн 1-мĕшĕ", „Ударный", „Ударник", Ворошилов йачĕпе тăракан колхозсем—пурĕ 10 колхоз республикăри „Хисеп хăми" çинче илемленсе тăраççĕ.

Ĕлĕкхи, тĕттĕм те чухăн, икĕ хут пусмăр айĕнче пурăннă мордва йалĕсемпе мордва çыннисем халĕ ирĕклĕ, чăн-чăн пуйан та куљтурăлă, тулли пурнăçпа пурăнаççĕ.

* * *

Мордва республики 1938 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн, ĕç тухăçне ӳстерессишĕн нихăçанхинчен вăйлă кĕрешес кăмăл пуррине сĳот уççăн кăтартса пачĕ. Чăваш республикипе социалисăмла ăмăртăва хутшăннă май, республикăра кашни районпа район, колхозпа колхоз, бригадăпа бригадă хушшинче социалисăмла ăмăртса ĕçлессине сарса йанă. Виçĕ республикă хушшинчи ăмăртура мала тухассишĕн Мордва республики ывăнма пĕлмесĕр вирлĕн кĕрешесси лайăх палăрат.

Калас пулат, Чăваш республикипе танлаштарсан, 1937 çулхи итогра Мордва республики техникăла куљтурăсем йенĕпе малта тăрат. Машинă-тракторлă станцисен ĕçĕ йенĕпе те Мордва республики Чăваш республикинчен маларах вырăна тухнă. Çав тĕлĕшпе Чăваш республики Мордва республикинчен лайăх опыт илме пултарат. Çав вăхăтрах агротехникăла ĕçсем йенĕпе, рекордлă тырпулшăн кĕрешес тата организацилĕх йенĕпе Мордва колхозĕсен чăвашсенчен опыт илме кирлĕ пулса тăрат.

Чăваш республикĕ 1937 çулта вăйлă тырпул туса илсе, Совет Сойузĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. 1938 çулта республикă çĕр пăтшăн кĕрешет. Мордва республики те хăйĕн умне çавăн пек задачă лартрĕ. Çапла ĕнтĕ 1938 çулта кӳршĕлĕ икĕ республикă хушшинчи ăмăрту пит вирлĕн пулса иртесси курăнат. Чăваш йалĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсен çавна пĕр кунлăха та манмала мар, ăмăртура мала тухассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмеле.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Бакури Сталин йачĕпе тăракан заводăн асфаљтран тунă нефт йухтарса хатĕрлемели установкисем.

Ф. Журављов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Чукунçул строителстви

Ункă шывĕ урлă лини хывнă

Виçĕ кун хушши ĕçленĕ хыççăн, Ункă шывĕ урлă кĕпер фермисене вырăнаçтарса çитернĕ. Фермăсене вырнаçтарассинче Мăн Çавал кĕперĕн фермисене лартнă чухне пысăк пахалăхпа ĕçленĕ комсомолец Семен Тарасов йертсе пыракан тата Шогелев бригадисем ĕçленĕ. Вĕсем кунта та пысăк хăвăртлăхсем кăтартнă.

Мартăн 22-мĕшĕнче кĕпер чăтăмлăхне тĕрĕслеççĕ. Кун хыççăн лини хывакан бригадăсем малала кайма тытăнаççĕ.

Хывнă лини тăршшĕ пайанхи куна 53 километăра йахăн шутланат. Шупашкара çитиччен 48 километр йулнă.

Стахановецсен йышĕ ӳсет

Шурккари Чапайев йачĕпе тăракан промысла ертелĕ (Шупашкар р.) февраљ уйăхĕнче 21 пин штук чăпта çапас вырăнне 27 пин штук çапса кăларса, плана 129 процент тултарчĕ.

Март уйăхĕнче те ертел лайăх ĕçлесе пырат. Йулашки вăхăтра ертелте стахановецсен йышĕ хăвăрттăн ӳсме пуçларĕ. Стахановец Куçма Йаковлев, Татйана Иванова, Прокопий Трофимов йулташсем кашни кунхи нормăсене 150 процент, Анастаçийа Гаврилова, Иван Александров, Прохор Александров йулташсем 130-шер процент тултараççĕ.

Ертел правленийĕ 1-мĕш кварталта палăрнă стахановецсене парнелеме 1200 тенкĕ укçа уйăрчĕ.

И. Виноградов.

Чĕрĕ таварсем тăратассине йĕркелемен

Сĕнтĕрвăрринчи „Социалисăм" ертел йулашки уйăхсенче начар ĕçлеме пуçларĕ. Кунашкал пулни чĕрĕ таварсем тăратассине йĕркелеменнинчен килет. Чĕрĕ таварсем çук пиркийех халĕ виçĕ цех ĕçлемеççĕ. Çăматă йăвалакан цех йанвар уйăхĕнчен пуçласа ĕçлемест. Тӳшексем тăвакан цех та курăс çитмен пирки кирлĕ пек ĕçлемест. Часчасах простойсем пулаççĕ.

Ертеле йĕркелĕ ĕçлеттерес тĕлĕшпе правленинче ĕçлекенсем, нимĕн те тумаççĕ. Куславккаран виçĕ тоннă курăс илсе килмеле, анчах „кайатпăр" тесех пайанхи куна çитерчĕç. Çавăн пирки те тӳшексем тăвасси чарăнса тăрат. Ытти ĕçлеме кирлĕ йапаласене илессине те правлени чăсса пырат.

Ертелĕн кăçалхи çул 7,5 гектар çине тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем акмала. Анчах ку вырăна халиччен те тислĕк тăкман, парниксем те çĕмрĕк.

Рабочисем пурăнакан хватерсенче тасалăх çук. Хăнкла-таракансем пур. Выртса-тăмали, шыв тытмали хатĕрсем çителĕксĕр.

Вл. Шлихер,
Ив. Ташкай.

Рабочисем хушшинче пулмаççĕ

ШĂХАСАН. Матшӳ йалĕнчи инвалидсен ертелĕ йулашки вăхăтра начар ĕçлеме пуçларĕ. Ертелĕн йанварпе февраљ уйăхĕсенче 9 пин штук чăпта çапмала тата 60 пин чӳлмек туса кăлармала пулнă пулсан, 5 пин чăпта (50 процент), 4.325 чӳлмек (28,8 процент) çеç туса кăларнă.

Ертел начар ĕçлени пĕтĕмпех правлени йĕркесĕр ĕçленипе пулса пырат. Правлени рабочисем хушшинче ĕçлессине пачах манса кайнă. Куљтмассăлă ĕç сӳнсе ларнă, пухусем тумаççĕ. Пĕр вăхăтра стахановецсене пĕрер екземпљар хаçат çыранса паратпăр терĕç те, çаплипех путланчĕ. Ĕç укçине те вăхăтра парса пымаççĕ.

Ник. Йаковлев.

Вăрман хатĕрлевĕ

Плана тултарчĕç

ЙЕТĔРНЕ. Улăх Шăматри „Спутник колхозника" колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăхра лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем вăрманта 10 кун хушши пĕр таталмасăр ĕçлесе, хăйсен планне 101,6 процент тултарчĕç.

С. Рйабиновский.

Вăхăта усăлă ирттереççĕ

ТРАК. Кушар Йунтапари Каганович йачĕпе тăракан колхозăн вăрман хатĕрлевĕнче йатарласа уйăрнă бригадă ĕçлет. Колхозниксем вăрманта тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем пушă вăхăта йаланах хаçат-журналсем, кĕнекесем вуласа ирттереççĕ. Ĕçлекенсем хушшинче „Лесной стахановец" йатлă стена хаçачĕ тухса тăрат.

Пурте пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Серафим Андрейев, Ксенофонт Трифонов, тата Тимофей Кузьмин йулташсем нормăна йалан 150 процент тултарса пыраççĕ.

Т. Скворцов.

Районти хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

Йăнăшсене бољшевикла тӳрлетмеле

Мартăн 20—22-мешĕсенче районти хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу икĕ тĕп ыйту сӳтсе йаврĕ: Парти Тĕпкомĕн 1938 çулти йанварти пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртесси мĕнле пыни тата 1938 çулхи çуракине районри хаçатсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен.

Парти Тĕп Комитечĕн йанварти пленумĕ „Коммуниссене партирен кăларнă чухне тунă парторганизацисен йăнăшĕсем çинчен, ПСК(б) Партинчен кăларнисен апељљацисем çине формаљнă-бюрократла пăхни çинчен тата çак çитменлĕхсене пĕтерес йенĕпе тумали ĕçсем нинчен" йышăннă постановлени пирĕн пичетшĕн пит те пысăк вырăнта тăрат. Пирĕн пичет Ленин—Сталин парти йертсе пынипе фашисăмăн троцкисла - бухаринла агенчĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ.

Анчах та, хаçатсен ĕçĕнче пысăк йăнăшсем пулнă, вĕсем халĕ те пур. ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕн решенийĕ кăтартса панă çитменлĕхсемпе йăнăшсем хаçатсен ĕçĕнче те сахал мар пулнă.

Хаçатсенчен нумайĕшĕ, ку шута республикăри хаçатсем те кĕреççĕ, партин вырăнти организацисен ĕçĕ çине тĕплĕн, тимлĕн тата тарăнăн пăхман. Хаçатсенче парти пурнăçĕпе ĕçĕсене йар уççăн сутатма кирли çинчен, темиçе хутчен те кăтартса панине маннă. Çак кăтартăва пăхăнман пирки хаçатсем парти членĕ çине тимлĕн пăхассине манса кайнă. Карйериссем, елекçĕсем, хăйсен тирне хӳтĕлекенсем панă „çигналсене" нимĕн тĕрĕслемесĕрех хаçатсенче пичетлесе кăларнă. Çакна пула ĕнтĕ тасаран коммуниссене, турĕ ĕçлекен работниксенех „тăшман", „сăтăрçă", „тăшмана пулăшакан" йата панисем сахал пулман.

Хăшпĕр хаçатсем хăйсен страницисенче елеклĕ статйасемпе заметкăсем пичетлесе тӳрĕ коммуниссене партирен те ĕçрен те кăларма май панă. Хаçатсенче елеклĕ материалсем тухни—вăл пирĕн хаçатсем хăйсем хăшпĕр чухне елекçĕсене, карйериссене пытанса ĕçлекен тăшмансене пулăшнине пĕлтерет. Ку вăл епĕр туса тăшмантан, тăшмана тусран уйăрма пĕлменнинчен килнĕ. Коммунис, комсомолец йе партире тăман работник хăйĕн ĕçĕнче мĕнле те пулин йăнăш тусанах, ун çумне „тăшман", „сăтăрçă", „тăшмана пулăшакан" йарлăксене çыпăçтарнă.

Ишлей районĕнчи „Колхозник хаçачĕ" нимĕн сăлтавсăрах парти райкомĕн иккĕмĕш çекретарне Троицки йулташа, Н. Йаковлева, В. Борисова, П. Йефремова, И. Йаковлева, М. А. Алексейева тата унпа пĕрле ĕçленĕ темиçе çынна халăх тăшманĕн йе тăшмана пулăшакансен йатне панă. Çаксене райĕçтăвком çекретарĕ Смирнов, çулйĕр пайĕн пуçлăхĕ Йаковлев тата ытти елекçĕсен „çигналĕсем" тăрăх тăшмансемпе йунашар лартнă.

Турхан районĕнчи „Коммунар" хаçат та питĕ „сыхлăхлă" пулса, Жданкина, Бељскине, Воронова тата ыттисене нимĕн тĕрĕслемен фактсем тăрăх тăшман йе вĕсене пулăшакансен ретне кĕртнĕ. Парти райкомĕ тата пуçламĕш организацисем тунă йăнăшсене çийĕнчех пĕтерме пулăшас вырăнне, хаçат хăй елеклĕ материалсене пичетленĕ.

Елеклĕ материалсем вĕсем часчасах питĕ хытă кăшкăраççĕ, сенсацилĕ пулаççĕ. Акă пĕр факт. Çĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕç" хаçат декабĕр уйăхĕнче банкра ĕçлекенсем çинчен пысăк материал пичетлесе кăларнă. Унта банк пуçлăхĕн Никитинăн тата ытти чылай работниксен ĕçре çитменлĕх пуррине курсан, хаçат редакцинче ĕçлекен **П. Йавский** „тăшмансем тата вĕсене пулăшакансем" тесе хаçат урлă кăшкăрат. Вăхăт нумай иртрĕ, анчах йăнăша халĕ те тӳрлетмен.

Елĕк районĕнчи **„Колхоз хаçачĕ"** парти Тĕпкомĕн пленумĕ хыççăн, карйерис тата елекçĕ Зорин хыççăн кайса нимĕн сăлтавсăрах Иварбейев йулташ çумне „тăшман" йарлăкне çыпăçтарнă.

Тĕп Комитет пленумĕ пулнăран вара вăхăт нумай иртрĕ. Хаçатсем хăйсем тунă йăнăшсене тӳрлетме пултарнă. Анчах та, йăнăшсене тӳрлетес ĕç питĕ вăраххăн пырат. Ку таранчен пичетлесе кăларнă материалсенче йăнăш тата тĕрĕс марри пулнине палăртсан та, хăшпĕр хаçатсем тӳрлетӳсем, хирĕçлесе çырнисене пичетлесе кăларма килĕшмеççĕ. Ишлей районнех илĕпĕр. Троицки йулташ тăшман пулманнине, унăн ашшĕ кулак пулманнине те халĕ тĕплĕн палăртнă. Анчах „Колхозник хаçачĕн" редакторĕ Йенисейев йулташ „халлĕхе иккĕленетпĕр" тесе хăйĕн йăнăшне тӳрлетмест. Елекçĕсемпе карйериссене тăрă шыв çине кăлармаст.

Трак районĕнчи И. М. Куликов йулташа елекçĕсем шургвардейец тесе елекленĕ сăлтавпа ĕçрен кăларнă, колхозран кăларма хатĕрленнĕ. Ун патне кĕрсе выртнă учителсене айăплама тытăннă. Материала тĕрĕсленĕ. Куликов йулташ çинчен елек сарни „Колхозник" хаçатшăн та паллă ĕнтĕ. Çапла пулин те, хаçат çак елекçĕсем çинчен те, Куликова тĕрĕс мар айăплани çинчен те пĕр строка та çырмаст. Çавăн пекех, хаçат Иеремейев çумне (районти çĕрĕç пайĕнче ĕçленĕскере) „тăшмана пулăшакан" йарлăкне çыпăçтарнă. Халĕ Йеремейев йулташ партире тăрат, анчах хаçат хăйĕн йăнăшне тӳрлетме шутламаст.

Елĕк районĕнче районти коммуниссен пухувĕ пулнă хыççăн, елекçĕсем Герасимовпа Зорин çинчен хаçатра заметкă кĕртме шутланă. Герасимов хăй Главлит уполномоченнăйĕ пулнипе усă курса, çав заметкăна хаçатран кăларттарса парахнă. Йаваш редактор Куралев Герасимовпа килĕшнĕ.

Елекçĕсемпе карйериссене партин, халăхăн чăн-чăн тăшманĕсене тăрă шыв çине кăлармала. Ку хаçатсен ĕçĕнче пысăк вырăнта пулмала. Çапла пулин те пирĕн хаçатсен ку ĕçре хăйуллăх çитмест. Вĕсем елекçĕсене, карйериссене хирĕç татăклăн кĕрешмеççĕ. „Елек тăрăх партирен тата ĕçрен кăларнипе, тĕрĕслемен материала пичетленипе епĕр йăнăш тунă" тесе хăйсене хăйсем вăрçнипе лăплаnaççĕ. Тӳрĕ, тасаран коммуниссем, работниксем çинчен елек сарса айăпа кĕнĕ карйериссемпе елекçĕсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсен тăшманла ĕçне пĕтĕм халăх умĕнче кăтартмаççĕ. Йăнăша бољшевикла тӳрлетме кирлине вĕсем манаççĕ.

Хаçатсен пысăк çитменлĕхĕ вăл парти пурнăçне çутатассине манăçа хăварни пулат. Кунта районти хаçатсемпе пĕрле парти райкомĕсем те айăплă. Парти райкомĕсем чылайĕшĕ (Кувакино, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Ишлей, Хĕрлĕ Чутай) хăйсен хаçат пурри çинчен маннă. Редакцисен ĕçĕсене тĕрĕслемеççĕ, вĕсен отчочĕсене итлемеççĕ, партилĕ ыйтусене çутатма пулăшмаççĕ, хаçата пĕтĕмпех „редактор аллине параççĕ. Çакна пула хаçатсен политикăла, партилĕ çивĕчлĕхĕ, тĕллевĕ, ыйтусене татăклă лартни çук. Ку вăл парти райкомĕсем, çав шутрах Обкомăн пропагандăпа агитаци тата пичет пайĕ, хаçатсене çителĕксĕр йертсе пынинчен те килнĕ.

Тунă йăнăшсене тӳрлетмеле, вĕсене халăх умĕнче йышăнмала, хамăр тунă йăнăшсем çинчен уççăн калассинчен пăрăнма йурамаст. Елеклĕ статйа çыракана ответ тыттармала, ăна тăрă шыв çине кăлармала. Хаçатсенче парти пурнăçне çутатассине тĕп вырăна лартмала.

* * *

Иккĕмĕш ыйту тăрăх канашлу çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçре районти, колхозри, бригадăри стена хаçачĕсен, ĕçйалкорсен мĕнле ĕçлемели çинчен тĕплĕн кăтартса хăварчĕ.

259 кружок ĕçлет

ШĂХАСАН. Районра РСФСР Верховнăй Совечĕпе Чăваш АССР Верховнăй Созетне суйламали Положенисене вĕренме 259 кружок организациленĕ. Вăл кружоксене 7847 çынна йавăçтарнă.

Çĕнĕ Чалкасси йалсоветĕнче 13 кружок ĕçлет, вĕренĕве 347 суйлавçă çӳрет. Ку таранччен кашни кружокрах 3-шер заљати туса ирттернĕ. Йалсоветри агитаторсенчен Дмитрийев, Силвестров, Йаковлев йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Вăрман Йенĕш йалсоветĕнче 18 кружокра 401 суйлавçă вĕренет. Кружоксен малтанхи заљатийĕсенче „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени" çинчен Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн Çеççинче Василйев йулташ тунă докладна вĕреннĕ, халĕ Чăваш АССР Конституцине вĕренеççĕ. Суйлав Положенисене вĕренес ĕç Атнаш, Уйкас Кипек, Троицк йалсовечĕсенче аван пырат. Ку йалсоветсенчи колхозсенче кашни бригадăрах кружоксем организациленĕ.

Ухман йалсоветĕнче ĕç йалтах урăхла тăрат. Кунта халĕ те суйлав саккунĕсене вĕренме пуçăнман. Йалти учителсем ĕçе йĕркелесси çинчен аса та илмеççĕ. Вулав çурчĕ те ĕçлемест. Высоковкă йалсоветĕнче кружоксем организациленĕ пулсан та, тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. 13 кружокран 3 кружокĕ çеç ĕçлет. Анат Сурăм йалсоветĕнче 10 кружокран 4 кăна ĕçе пуçăннă.

В. Чернов.

Социалисăмла аслă çĕршывшăн тума пултарман ĕç çук!

Мускав! Шăп пĕр çул кайала епĕр, Çурçĕр польусĕн ĕмĕрхи вăрттăнлăхне уçса палăртас шутпа, пирĕн хăватлă тăван çĕршывăн заданине, историлĕ Сталинла наказа пурнăçа кĕртес шутпа, Мускавран тухса кайрăмăр.

Водопйановăн, Молоковăн, Алексейевăн, Мазурукăн геройла вĕçевĕсене епĕр ырă сунса тавтунипе те йуратупа асăнатпăр. Вăл вĕçевсем пире куçса çӳрекен пăр çинче халиччен пулман ăслăлăхпа тĕпчев станцине туса хума май пачĕç. Совет самольочĕсен çунаттисем çинче пире Арктикă чĕрине илсе çитерчĕç. Социалисăмла аслă çĕршывшăн тума пултарман ĕç нимĕн те çуккине, пырса кĕмеле марри нимĕн те çуккине совет льотчикĕсем совет самольочĕсемпе кăтартрĕç. Епĕр пĕлетпĕр: тăван çĕршыв хушсан,—пирĕн Сталин пăхса ӳстернĕ мухтавлă льотчиксем пирĕн планета çинчи кирек хăш вырăна та анса ларĕç.

Социалисăм çĕршывĕн мухтавлă соколĕсем! Пурăнăр, ĕçлĕр, çĕнтерĕр! Кирек мĕнле çанталăк условисенче те пур талкăшсене те çĕнтерсе пырăр!

Папанин, Ширшов, Кренкел, Федоров.

—○★○—

Легендарлă експедици

Шăп пĕр çул кайала—1937 çулхи мартăн 22-мĕшĕнче—Мускавран сывлăш експедици Çурçĕр польусĕ çине вĕçсе тухса кайрĕ. Ăна академик О. Й. Шмидт йертсе пынă. Вĕçев отрйадне Совет Сойуз Геройĕ М. В. Водопйанов йертсе пынă. Експедици составĕнче 43 çын пулнă, вĕсем хушшинче куçса çӳрекен пăр çинче хĕлкаçакансем—Папанин, Ширшов, Кренкел тата Федоров йулташсем пулнă.

(ТАСС).

—○★○—

Папаницăсем „Мечта“ спектакль премйерĕнче

Мартăн 21-мĕшĕнче камерлă театрта Совет Сойуз Геройĕ М. В. Водопйанов çырнă „Мечта“ пйесăн—авторĕ çĕнĕрен йусаса çырнă пйесăн премйерĕ пулнă. Спектакльте Çурçĕр польусне хăйулăн çĕнсе илекенсем—Папанин, Ширшов, Кренкел тата Федоров, Çовет Сойуз Геройĕсем Водопйановпа Чкалов, Çурçĕр польусĕ експедицинче пулнă çынсем, столицăри театр общественноçĕн представителĕсем пулнă.

Зала Папанин, Ширшов, Кренкел тата Федоров пырса кĕрсен вĕсене хăвăслă оваци туса кĕтсе илнĕ. Пĕтĕм зал ура çине тăрса тăван çĕршывăн пултарулă ывăлĕсене нумай вăхăт хушши алă çупса саламланă.

Папаницăсене хĕрӳллĕн саламласа РСФСР халăх артисĕ А. И. Таиров тата пйеса авторĕ Совет Сойуз Геройĕ М. В. Водопйанов сăмах тухса каланă.

Спектакль, куракан халăх умĕнче пысăк çитĕнӳпе иртнĕ.

(ТАСС).

—○★○—

Çурçĕр польусне вĕçни

Совет Сойузĕн Геройĕ В. С. Молоков

1937 çулхи мартăн 22-мĕш. Çак куна нихăçан та манас çук. „СССР Н-171“ йатлă йăвăр сывлăш карапĕпе епĕ аеродромран чĕре тулли хавалăхпа сывлăша çĕклентĕм. Столицăпа сыв пуллашса сывлăшра темиçе хут вĕçсе çавăрăнnă хыççăн, ескадрильйă çурçĕрелле çул тытрĕ. Пирĕн умра халиччен пулман рейс—Арктикă чĕрине, вăрттăнлă польуса вĕçсе каймала.

Пирĕн планетăн çурçĕрти тӳпине кайакан çул машăн уйрăмах илĕртӳлĕ пулчĕ. Манăн самольотсемпе хĕвелтухăç Арктикăри хайар талкăшсенче вĕçме тиврĕ. Лаптевсен тинĕсĕн, Чукоткă, Хĕвелтухăç-Çĕпĕр, Карск тинĕсĕсен çыранĕсене, Çĕпĕрти йуханшывсем илемлĕн авкаланса-хуçкаланса йухса выртнине авал пĕлетĕп епĕ. Анчах Франц-Иосиф çĕрĕ çине хамăн пурнăçра пĕррĕмĕш хут çул тытатăп.

Експедицинчи çынсем. Мускавран тухса кайнă чухне, вĕсене парти, правителствă, халăхсен аслă çулнуçĕ Сталин йулташ мĕн тери ответлă ĕç шанса панине туйса тăчĕç. Çакă вăл историлĕ ĕçе ăнăçлăн вĕçлеме пире хавалăхпа вăйхал пачĕ, вăл ĕç ăнăçлăн пулассине ĕненсе тăтăмăр.

Çурçĕр польусне Водопйанов, Алексейев, Головин, Козлов пек польарта вĕçекен опытлă пилотсем кайрĕç. Хĕвеланăç Арктикăри вĕçев условисене вĕсем пĕлсе тăнă, çак вăл центрти польар бассейнин çын пырса курман районĕсенче тĕлпулакай мĕн пур йăвăрлăхсемне чăрмавсене ăнăçлăн сирсе йама пулăшрĕ.

Çанталăк нумайччен чăрмантарса тăчĕ. Çапах та епĕр тӳсĕмлĕхе, асăрханса тăрассине пĕр самантлăха та çухатмарăмăр—çак пахалăхсем вĕсем Арктикăра ĕçленĕ çĕрте чи кирлисем пулса тăраççĕ.

Рудольф утравĕ çинче нумайччен кĕтме тиврĕ. Тĕтресен, йур çунин, штормсен вĕçĕ-хĕрри те çук пек туйăнчĕ. Ак ĕнтĕ кĕтнĕ кун тинех çитрĕ.

Чи малтанах,—ăна пурте пĕлеççĕ,—польус çине Совет Сойузĕн Геройĕ М. В. Водопйанов вĕçсе кайрĕ. Çурçĕр польус районĕнчи пăр çинчи паха аеродром çинчен—вăл йанă радиограммăна илсен епĕр çав тери хĕпĕртерĕмĕр.

Майăн 25-мĕшĕнче польус çине Молоков, Алексейев тата Мазурук карапĕсем вĕçесси çинчен решени йышăнтăмăр.

Хатĕрленӳ ĕçĕсене йалтах туса çитертĕмĕр те, лăкăх тултарса лартнă машинă „СССР Н-171“ часах Рудольф утравĕнчи йурлă аеродром çинчен аран-аран уйăрăлса çĕкленчĕ. Малтанах пĕлĕтсен айĕпе вĕçме тиврĕ. Пысăк мар çӳлĕшре „СССР Н-171“ карап пĕлĕт айĕнчен тухрĕ. Епĕр Алексейевпа Мазурука кĕтме пуçларăмăр. Алексейев часах çĕкленчĕ, анчах Мазурука кĕтме май килмерĕ: Франц-Иосиф Çĕрĕ çинчен Çурçĕр польусне çитсе кайала вĕçме шутласа илнĕ горӳчи запасĕсене моторсем пит нумай пĕтерессĕ.

Çанталăк çав тери лайăхланчĕ. Машинăна сехетре 170—180 километрлă хăвăртлăхпа вăтамран 1700 метр çӳлĕшĕнче тытса пыма тиврĕ. Пулашки икĕ сехет хушшинче çеç Алексейев ыйтнипе епĕр хăллен кайрăмăр.

Çамрăк, талантлă штурман Альошă Ритсланд, кăçал дирижабль ӳксе çĕмĕрĕлнĕ чухне вăхăтсăр вилĕскер, çула пит тĕрĕс тытса пычĕ.

Майăн 26-мĕшĕнче ирхине 6 сехет тĕлнеле „СССР Н-171“ польус урлă вĕçсе каçрĕ.

— Акă вăл çĕр чăмăрĕн нумайĕш тĕпчевçĕсем çитес тесе тăрăшнă илĕртекен вырăнĕ!

Епĕ хамăн йуратнă тăван çĕршыв çинчен мăнкăмăллăн шухăшласа илтĕм—вăл çĕршыв тĕнчере чи малтан Çурçĕр польусне парăнтарма пултарчĕ.

Польус тĕлне çитсен çавăрăнтăм та, епĕ машинăна Папанин лагерĕ çине илсе кайрăм. Тепĕр темиçе минутран самольот лагере анса та ларчĕ. Тусăмăрсемпе хĕрӳллĕн те хавăслăн тĕлпултăмăр...

Папаницăсене, вĕсен пурлăхĕсене Çурçĕр польусне илсе çитернĕ льотчиксем ийунĕн 6-мĕшĕнче хĕлкаçма йулакансемпе хĕрӳллĕн сыв пуллашрĕç те кăнтăр йеннелле çул тытрĕç. Самольот çӳлерен çӳле çĕкленсе пырат.

— Тусăмăрсем, тепре куриччен сыв пулăр! Сталинла заданине пурнăçа кĕртнĕ çĕрте сире ăнăçлăхсем тума сунатăп.

Часах Рудольф утравĕнчи аеродром пире çĕнĕрен кăмăллăн йышăнса илчĕ. Кайала килмелли çул çăмăлрах пек туйăнчĕ, анчах пит авал мар минутăсем те пулчĕç. Нуринчен ытла Рудольф утравĕнчен материк çине вĕçсе тухма йăвăр пулчĕ. Вайгач тĕлĕнче тĕтре витĕр вĕçрĕмĕр. Амдермăра анса лармa та çавăн пекех йăвăр пулчĕ.

Хайар çутçанталăкпа кĕрешнĕ çĕртен епĕр çĕнтерсе тухрăмăр. Епĕр Мускава таврăнни хавăслă пулчĕ, кунта пире йуратнă Сталин йулташ, партипе правителствă руководителĕсем кĕтсе илчĕç.

Сывлăшри ескадрильйă Çурçĕр польусне вĕçни совет льотчикĕсене хаклă опытсемпе пуйанлатрĕ. Çав вĕçев Чкаловăн, Байдуковăн, Беляковăн, Громовăн, Нумашевăн, Данилинăн нихçан манми вĕçевне хатĕрлерĕ.

1938 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче Ленинград вокзалĕнче И. Д. Папанина, П. П. Ширшова, Е. Т. Кренкеле, И. К. Федорова кĕтсе илсе, епĕ хăйулă польарниксене хĕрӳллĕн саламларăм. Çав минутăсенче пирĕнтен кашниннех советăн тĕлĕнмеле лайăх çыннисемшĕн мухтанас туйăм пулнă. Епĕр вĕсене Çурçĕр польусĕн шурă пăнчи патне çитерсе хăвартăмăр. Кирлĕ пулса тăрсан, парти, правителствă, Сталин йулташ çĕнĕ задани парсан, совет льотчикĕсем совет çыннисене кирек ăçта та, çĕр чăмăрĕ çинчи кирек хăш вырăна та илсе çитерĕç.

—○★○—

Комсомол организацийĕ тунă йăнăшсене тӳрлетет

Мускаври ПСÇЛКС Ленинград райкомĕ комсомолецсене ПСÇЛКС ретĕнчен кăларнă чухне тунă йăнăшсене тӳрлетет. Йулашки пĕр уйăх çурă хушшинче комсомолтан кăларнисене 16 апелляци пăхса тухнă, вĕсенчен 13-шне ПСÇЛКС ретне кайала илнĕ.

ПСÇЛКС ретне кайала илнисене ĕçе активлă йавăçтараççĕ.

Чи лайăх производственниксем партине кĕреççĕ

Челябинскри Сталин йачĕпе тăракан трактор заводĕнчи парторганизаци чи лайăх производственник-стахановецсене партине илет. Йулашки икĕ уйăх çурăра ПСК(б)П кандидатне 52 çынна илнĕ, ПСК(б)П кандидачĕсенчен ПСК(б)П членне 48 çынна куçарнă.

ПСК(б)П кандидатне илнисен шутĕнче—стахановец Зузуленко йулташ пур, вăл суйлав кампани вăхăтĕнче участкăри суйлав комиссин секретарĕ пулса ĕçленĕ. Нумайах пулмасть Зузуленко йулташа Тракторозаводскри райсовет ответлă секретарне суйланă.

Партине илнисем валли ПСК(б)П историне тата кулленхи политикăна вĕренмелли шкулсем организациленĕ.

—○★○—

200 мĕлйун центнер кăшмантан сахăр тунă

1937 çулта туса илнĕ кăшмантан сахăр туса пĕтересси вĕçленсе пырать. 189 сахăр заводĕнчен 121 заводра ĕçлесе пĕтернĕ.

Мартăн 15-мĕшне мĕн пурĕ 200 мĕлйун центнера йахăн кăшмантан сахăр тунă. 158 мĕлйун та 777 пин пăт сахăр песокĕ туса кăларнă. Ку 1935—36 çулта туниичен 15 мĕлйун та 300 пин пăт тата 1936—37 çулта туниичен 34 мĕлйун пăт ытларах туса кăларни пулать.

Заводсенче йулнă кăшмансем чылай. 1937 çулта туса илнĕ кăшмантан мĕн пурĕ 160 мĕлйун пăт сахăр туса кăлараççĕ.

(ТАСС).

—○—

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене сарма пуçланă

Мартăн 20-мĕшĕнче Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнче, Иркутск, Омск, Оренбург, Свердловск тата ытти инçетри крайсемпе облăçсенче тата нацилĕ республикăсенче Осоавиахимăн Пĕтĕм Сойузри 12-мĕш лотерей билечĕсене сарма пуçланă.

(ТАСС).

„С. Дежнев“ пăрçĕмĕрен

Ленинградри Марти йачĕпе тăракан заводра пăрçĕмĕрен йышши карап туса пĕтереççĕ. Вăл карапа Арктикăна чи малтан çăнаса вĕренекенсенчен пĕрин йатне—„С. Дежнев“ йатне панă. Апрелĕн 20-мĕшĕнче пăрçĕмĕрен тинĕсе тухмала.

Карап çинче навигацилĕ чи çĕнĕ приборсем, механизациленĕ грузоподйомниксем тата виçĕ радиостанци пур. Пĕтĕм пăрçĕмĕрене телефонизациленĕ тата радиофикациленĕ.

(ТАСС).

—○—

58.638 зайавкă

МУСКАВ, мартăн 21 мĕш Колхозсем, совхозсем, МТСтанцисем, колхозсенчи таварлă выльăх-чĕрлĕх фермисем тата йалхуçалăхĕнче малта пыракансем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма ыйтса 58.638 зайавлени панă.

Вăтăр республикă, крайсемпе облăçсем выставкă комитетне кандидатсен малтанхи спискисене татăклăнах çирĕплетме тăратрĕç.

—○—

Йапони таварĕсене бойкот туни

Хальхи вăхăтра 21 çĕршывра Йапони таварĕсене бойкот тăваççĕ. Çав бойкот буржуалă демократилĕ государствăсенчи халăхсен анлă сийĕсенче ытларах та ытларах сарăлса пырать. Йапонине бойкот тăвас ыйтупа йулашки вăхăтра Лондонра пулнă пĕтĕм тĕнчери конференцинче миршĕн кĕрешекен 25 пысăк организацисенчен (вĕсен членĕсен хисепĕ çĕр мĕлйуна çитет) 800 делегат пухăннă. Çак конференци Йапони военщинин Китайри ĕçне сивленĕ тата пĕтĕм тĕнчери халăхсене Китай халăхне пулăшма чĕннĕ.

Англири Китайа пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет укçа-тенкĕсем пухнă. Комитет кашни ернерех Китайа медикаментсемпе тумтирсем йарса тăрать. Нумай магазинсенче „Йапонийе бойкот тăвассишĕн“ йатлă выставкăсем организациленĕ. Хаçатсем бойкот тумали Йапони таварĕсен спискисене пичетлесе кăлараççĕ. Листовкăсем те нумай кăларнă, вĕсенче Китайа мĕнле пулăшмали çинчен ăнлантарса панă. Йапонийе хирĕçле бойкота Англин мĕн пур колонийĕсенче туса пыраççĕ. Австралире тата Индире рабочисем Йапони парохочĕсем çине таварсем тийеме пăрахнă.

Францире йулашки вăхăтра Йапонийе хирĕçле бойкота анлăн сарса йарас тĕлĕшпе 200 митинг ытла туса ирттернĕ. Францири рабочисем Йапонине йамали таварсене тийессинчен татăклăнах пăранаççĕ.

Йапонийе хирĕç бойкот тăвасси Америкăра пысăккăн сарăлнă. Йапонине бойкот тума чĕнекен листовкăсене пиншерĕн пичетлесе кăларнă. Кунта „Китай тусĕсен Америкăри лигине“ тунă. Пуринчен ытла Йапонине пурçăн бойкочĕ тунипе сисĕмлĕх çапнă, пурçăн Йапони експорчĕн чи пысăк статйисенчен пĕри пулса тăрать. Йапонирен Америкăна чĕр пурçăн турттарасси пĕр çул хушшинче икĕ хут чакнă. Çавăн пекех Америкăра Йапонин ытти таварĕсене сутасси 60—70 процент чакнă.

(ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: Пединститутра вĕренекен Т. М. Михайлова йулташ. Вăл Шупашкарти хĕрарăмсен пăшалпа перессипе пулнă ăмăртуĕнче 50 метртан персе 46 очко илнĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

С. М. Киров музейĕ уçăлать

ЛЕНИНГРАД. (Хамăр корр). Сергей Миронович Киров музейне уçас умĕнхи ĕçсем вĕçне çитсе пыраççĕ. Ку музей ĕлĕкхи Кшесинский дворецра уçăлать.

Пĕррĕмĕш уйрăм Сергей Костриков (Кировăн ĕлĕкхи хушамачĕ) çурални çинчен метрически выпискипе уçăлать. Уржум, Омск, Хусан, Тбилиси, Владикавказ хулисенчен илсе килнĕ нумай материалсем Киров йулташ революцин пысăк, шиксĕр трибунĕ пулнине кăтартаççĕ. Ĕлĕк Омск хулинче Киров организациленĕ вăрттăн типографин макетне туса хатĕрленĕ.

Йатарласах пĕр залра Кировăн дипломатлă ĕçне, вăл Грузинче (унта меньшевиксем хуçа пулса пурăннă вăхăтра) совет государствин полпречĕ пулса ĕçленине кăтартаççĕ: кунта Кировăн полпред паспорчĕ, вăл çырнă нотăсем т. ыт. те пур.

Иккĕмĕш хутлăхра Сергей Миронович Киров Ленинградра ĕçлесе пурăннă вăхăта кăтартаççĕ. Музейра Кировăн Смольнăйри тата килти ĕç кабинечĕсен макечĕсем пулаççĕ. Киров йулташ çырса кăларнă кĕнекесем пурте кунта куранса тăмала пулаççĕ. „Киров искусствăра“ йатлă пай пуйан пулать. Ленинградри Зверев, Франц, Авилов художниксем тата скульпторсем Киров çинчен, унăн ĕçĕсем çинчен ӳкерчĕксем хатĕрлеççĕ.

Музей Сергей Миронович Кировăн, Сталин йулташ соратникĕн чи чаплă памйатникĕ пулать.

А. Михайлов-Сидурай.

Гр. Рассадин.

—○★○—

Ленинградра метро пулать

Ленинград хулине аслăлатмалли генеральнăй план тăрăх, Ленинградра метрополитен тумала. Халь метрон ескизлă пройектне хатĕрленĕ ĕнтĕ, ку пройекта профессăр А. Н. Пассек (метростройăн аслă консультанчĕ) хатĕрленĕ. Ленинградри организацисем пройекта çирĕплетсе Мускаври аслă учреждениcене татăклăн çирĕплетме панă.

Пройект тăрăх, метрон малтанхи черечĕ 14 километр çурă тăршшĕ пулмала. Мускав вокзалран пуçласа Октйаберĕн 25-мĕш проспект айĕн, истори Тĕп музейĕ патне çитиччен, унтан Международнăй проспект айĕн халь тăвакан чаплă пысăк „Дворец Советов“ патне çитиччен чăсăлмала.

Специалиссем каланă тăрăх, Ленинградри метрона çĕр айĕнчен чавма Мускавринчен çăмăлтарах пулать. Лачакалă çĕр сийĕн айĕнче çирĕп тăмлă сий пур.

Ленинград хулинче темиçе канал та пур, метрона çав каналсем айĕн чакалаççĕ. Сăмахран, Фонтанкă айĕн икĕ хут каçать, Грибойедов каналĕ айĕн 2 хут, Обводнăй канал айĕн пĕр хут каçать.

Метро туни Ленинград ĕçхалăхне пысăк пулăшу парать.

А. Михайлов-Сидурай.

—□◆□—

Вкладчиксен йышĕ ӳсет

Шупашкар хулинчи перекет кассине укçа хурасси çулсеренех ӳссе пырать. 1937 çулхи йанварĕн пĕррĕмĕш тĕлне 5.549 вкладчик пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн пĕррĕмĕшне вĕсен шучĕ 6.160 çынна çитнĕ.

1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне перекет кассине хывнă укçа 1.815.000 тенкĕ пулнă, кăçалхи йанварĕн 1-мĕшне вăл укçа хисепĕ 2.593.000 тенке çитнĕ.

Арк. Нестеров.

—○★○—

„Ленин в Октябре“ фильм Елĕкре

Мартăн 16-мĕшĕнчен пуçласа Елĕкре „Ленин в Октябре“ йатлă историлĕ фильм кăтартаççĕ. Картинă курма кашни кун пит нумай халăх пухăнать. Колхозсенчен ушкăнсемпе пырса кураççĕ. Куракансем ăна питĕ йуратса мухтаççĕ. Икшер хут пырса куракансем те чылай.

В. Йефремов.

—○★○—

Колхозри драмкружок

ИШЛЕЙ. Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз çумĕнче чылай вăхăт хушши ĕнтĕ драмкружок ĕçлет. Çак кунсенче драмкружок район центрне кайса М. Горькин „Васса Железнова“ пйесине лартса пачĕ.

Драмкружока Охотин комсомолец йертсе пырать.

Вл. Сергейев.

Заметкăсем тăрăх

„Вырăна тухса пулăшни çук“

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатра февралĕн 27-мĕшĕнче çавăн пек йатлă заметкă пичетленсе тухнăччĕ. Унта Анат Ачакри (Йетĕрне районĕ) „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе пыманни çинчен çырнă.

„Çĕнĕ пурнăç“ колхоз Тури Ачакри колхозпа ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ орденоносец Краснов йулташ йертсе пыракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Хальхи вăхăтра „Çĕнĕ пурнăç“ колхозра çуракине лайăх хатĕрленсе пыни çинчен пĕлтерчĕç. Уйрăмах çĕре çемçетмелисем хатĕрлесе пысăк ĕçсем тунă. Вăрлăхсене пур, культурăсем тăрăх та суртласа хатĕрленĕ. Тулăпа пăрçа вăрлăхĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа тасатма тытăннă. Йалхуçалăх машинисене, кӳлмелли таврашсене пĕтĕмпех йусаса çитернĕ.

Колхозниксем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕ, иртнĕ çулхи ӳсĕмсем вĕсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарнă. Колхозра агрокружок пур. Унта колхозниксем хайсен пĕлӳвĕсене ӳстерсе пыраççĕ.

Колхозниксен ĕçри хавалăхĕ пысăк. Вĕсем çуракине лайăх хатĕрленессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе ĕçлеççĕ.

—○—

Выльăв укçи

ИШЛЕЙ. Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомĕн 6-мĕш выльăвĕнче машинă-тракторлă станцинче ĕçлекен Михаил Петров 300 тенкĕ, Мишер йалсоветĕнчи почтальйон Дарийа Михайлова 200 тенкĕ выльаса илнĕ.

Гер. Шчербаков.

—○—

Плана тултарчĕ

Кушарти Буденный йачĕпе тăракан колхоз (Трак р.) Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлет. Колхоз председателĕ Федоров йулташ колхозниксене вăрманта ĕçлеме лайăх организациленипе хатĕрлес плана—104 процент, турттарассине 140 процент тултарчĕç. Анчах колхозниксем ку çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем иккĕмĕш кварталти вăрман хатĕрлев планне срукчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ вăрманта 6 колхозник лашапа ĕçлеççĕ.

Н. Козлов.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Чăваш АССР Йуçтици халăх комиссариачĕ йуридически курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Курс виçĕ уйăхлăх пулать, унта нотариус работникĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Курса арçынсене тата хĕрарăмсене 23 çулхисенчен 40 çулхисем таран, 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курса вĕренме илнĕ чух малтан 7 çул вĕреннĕ программă тăрăх вырăс чĕлхипе, математикă тата обществоведенипе испытани тăваççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Йуçтици халăх комиссариатне зайавленипе пĕрле çирĕплетнĕ автобиографи тата çакнашкал документсене памала:

1. Вĕренни çинчен
2. Миçе çулхине кăтартакан хут
3. Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ хут
4. Судпа айăпланманни çинчен.
5. Йулашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен отзыв
6. Икĕ фотокарточкă
7. Паспорт тата çар билетне хăйпе пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Испытанисем апрелĕн 7-мĕшĕпе 9-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Заняти 1938 ç. апрелĕн 10-мĕшĕнче пуçланать.

Испытанине чĕннĕ хыççăн çеç килме йурать.

Курса илнисене стипенди 200 тенкĕ кашни уйăхра парса тăраççĕ, общежити пур тата выртса тăмали йапаласем параççĕ.

Адрес: Шупашкар хули, ЧАССР, Хĕрлĕ площадь, № 24.

Йуçтици халăх комиссариачĕ.

3—2

Академи театрĕнче

Мартăн 23-мĕшĕнче

Вырăсла спектакль

Н. В. Гоголь

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Художник И. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 145.

Абонемент № 5, талон № 14.

Чăвашсен Коммунисла Йалхуçалăх аслă шкулĕн столовăйне

Столовăйсем тытакан организаци аллине памала тунă.

Учрежденисем, предприйатисен претензи пур пулсан, апрелĕн 1-мĕшчен ЛИКВИДКОМА ПАМАЛА.

Апрелĕн 1-мĕшĕ иртсен нимĕнле претензи те йышăнмаççĕ.

ЛИКВИДКОМ.

„Чăваш Коммунĕ“ çыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 144 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.